ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

49 (4411) №, 2014, декабрь (раштав), 4
(1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

МУРКАШРА

## Сар чечек те тунсăхлать – ăшă çумăр çумасан, Шкул ачи те тунсăхлать – «Тантăш», «Тетте» пулмасан...



**Декабрĕн 2-мĕшĕнче Муркашри Культура çуртĕнче «Хыпар» Издательство çурчĕн Кунĕ иртрĕ. 16 хаçат-журналта ĕçлекен журналистсем халăх умне тухса хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕн паллаштарчĕç.**

Хавасла уява Муркаша халлана сăвăпа пуçларĕ «Хыпар» хаçатăн директорĕ – тĕп редакторĕ Валерий Владимирович Туркай.

– Маншăн çак район питĕ пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесен кунта хаçат никĕслевçи Николай Васильевич Никольский çуралса ӳснĕ. Пирĕн вара пурте пĕрле унăн пархатарлă ĕçне асра тытса малалла тăсмалла. Эпир вулакансемсĕр пурăнаймастпăр. Мĕн пĕчĕкрен ачана хаçат-журналпа туслаштармалла. Паян пĕчĕккисем «Тетте» журнал, «Тантăш» хаçат вуламасан, ыран вĕсем «Хыпара» алла илесси питĕ иккĕленӳллĕ. Хисеплĕ ашшĕ-амăшĕ, тĕпренчĕкĕрсем анлă тавракурăмла пулччăр тесен пирĕн сăмахсене асра тытса паянах почта уйрăмне васкăр, – пурне те чĕнсе каларĕ Валерий Владимирович.

Тĕлпулу хыççăн Муркаш шкулĕн 9-мĕш класĕнче вĕренекен Аня Зайцева та «Тантăш» çырăнас тĕллевлине пĕлтерчĕ.

– Киле çитсен кун пирки кукамая систеретĕпех. Вăл мана питĕ юратать, çавăнпа пĕр сăмахсăрах ĕмĕте пурнăçа кĕртĕ. Улттăмĕш класра вĕреннĕ чухне юратнă кăларăмăн страницинче хам пирки те вуласа савăннăччĕ. Вăл вăхăтра нумай ӳкереттĕм те художник пулас килни пирки хыпарланăччĕ. Халĕ шухăшăм улшăнчĕ. Юрист профессине алла илес килет. Чим, хăй вăхăтĕнче «Теттепе» те туслăччĕ эпĕ. Унти сăвăсемпе калавсене кăмăлласа вулаттăм, ӳкерчĕкĕсене пăхса савăннă май: «Эх, манăн та илемлĕ ĕçсем пур та-ха, анчах редакцие ярса пама аванмарланатăп», – тесе час-час шухăшлаттăм», – сăмахлать Аня.

Пушă вăхăтра чунтан кĕнеке вулама юратакан Аня тус-юлташĕсене те «Тетте», «Самант» журналсемпе тата «Тантăш» хаçатпа туслаштарас ĕмĕтлине систерчĕ.

– Вулакан çыннăн çеç тавракурăмĕ аталанать. Акă, сăмахран, кăçалтан вырăс литературипе сочинени çырса экзамен тытмалла вунпĕрмĕшсен. Лайăх пулăм ку. Тинех çамрăксем тĕрлĕ хаçат-журнал вулама тытăнĕç. Библиотека та унчченхинчен ытларах шавласа-кĕрлесе тăрĕ. Пĕри те тепри паллă писательсен произведенийĕсемпе нумайрах паллашĕ. Ара, пурин те экзамена ăнăçлă тытас килет-çке, – терĕ кăмăллăн мал ĕмĕтлĕ Аня Зайцева.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*
Муркаш районĕ,
Муркаш.

**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**

ÇЫРĂНТАРУ – 2015

**Декабрĕн 5-15-мĕшĕсенче хастар çырăнтару вунăкунлăхĕ иртет. Хаçат-журнала йӳнĕрех хакпа çырăнса юлма васкăр!**

**Шутлă кун шухăшлаттарать. Çырăнтару вĕçлениччен темиçе кун çеç юлать. Хаклă тăванăм, хисеплĕ вулаканăм! Эсĕ «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсене, тархасшăн, çырăнмасăр ан юлсам!**

| Кăларăмсем | Индекс | 2015 çулăн пĕрремĕш çурринче илсе тăма çырăнтаракан хаçат-журнал хакĕсем | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче. Раштавăн 5-15-мĕшĕсенче | Почта уйрăмĕсенче. Декада хыççăн | Почта уйрăмĕсенче. Декада вăхăтĕнчи экономи | «Чăваш пичечĕ» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | ВД800 | 645 | 732,66 | -87,66 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | В8353 | 264,66 | 304,08 | -39,42 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | ВД804 | 307,86 | 358,08 | -50,22 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | В1515 | 278,46 | 325,08 | -46,62 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | В1524 | 176,46 | 205,02 | -28,56 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | В4806 | 176,46 | 184,04 | -7,58 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | В4838 | 327,54 | 376,62 | -49,08 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–Кил | В3887 | 176,46 | 184,08 | -7,62 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | В1529 | 267,36 | 319,08 | -51,72 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | В4608 | 155,7 | 185,04 | -29,34 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК | В3429 | 116,32 | 140,36 | -24,04 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | В4807 | 253,86 | 298,08 | -44,22 | 192 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства ЧР | В4847 | 612,24 | 743,58 | -131,34 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | В4802 | 237,66 | 274,08 | -36,42 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | В3208 | 150,9 | 181,02 | -30,12 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | В3771 | 120,18 | 143,52 | -23,34 | 114 | 111 | 90 |

# «Анне кунĕ ячĕпе» конкурс пĕтĕмлетĕвĕ

Ачасем, чи çывăх та хаклă çыннăрсене Анне кунĕ ячĕпе саламларăр-и? Вĕсене хăвăр мĕн тери юратнине калама тата ĕçпе кăтартса пама манмарăр пуль? Сирĕн туйăмăрсем еплерех пысăк пулнине эпир конкурса килнĕ ĕçсенчен ăнлантăмăр. Хăшне-пĕрне хаçатра пичетлерĕмĕр те ĕнтĕ. Шел, çĕнтерӳçĕсен йышне пурне те кĕртме çук. Чи-чи маттуррисене суйлама çăмăл пулмарĕ. Камсем-ха вĕсем, мала тухнисем?

**Чи хитре калав:**

1. Никита НИКИТИН (Элĕк районĕ, Шĕмшеш шкулĕ);
2. Валерия АШМАРИНА (Елчĕк районĕ, Кĕçĕн Таяпа шкулĕ);
3. Павел ЧЕРНОВ (Самар облаçĕ, Шунтал районĕ, Палантай шкулĕ);

**Чи хитре сăвă:**

1. Анастасия УТКИНА (Улатăр районĕ, Суйкăн шкулĕ);
2. Семен СПРИНСЯН (Патăрьел районĕ, Пăлапуç Пашьел шкулĕ);
3. Татьяна КРУГЛОВА (Самар облаçĕ, Шунтал районĕ, Палантай шкулĕ);

**Чи хитре ӳкерчĕк:**

1. Наташа СМИРНОВА (Вăрнар районĕ, Вăрнарти 2-мĕш шкул);
2. Анастасия ПАВЛОВА (Шупашкар, 49-мĕш шкул);

**Чи хитре сăнӳкерчĕк:**

1. Анастасия АНИСИМОВА (Улатăр районĕ, Суйкăн шкулĕ);
2. Кристина ПЕТРОВА (Шупашкар, 49-мĕш шкул);
3. Денис ПЕТРОВ (Шупашкар, 49-мĕш шкул).

***Çĕнтерӳçĕсене саламлатпăр! Малашне те хастар пулма сунатпăр. Редакцие кĕрсе тухма ыйтатпăр.***

# ĂШĂ САЛАМСЕМ




Элĕкри вăтам шкулта биологи вĕрентекен **Альбина Юрьевна АЛЕКСЕЕВА** ыран 50 çулхи юбилейне паллă тăвать. 1972 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче вăл пĕрремĕш класа кайнă, ăна пĕрремĕш шăнкăрав янăраттарма шанса панă. Унтанпа 42 çул иртнĕ. Альбина Юрьевна шкултан ăнăçлă вĕренсе тухса, биолог-химик специальноçне алла илсе Элĕк районĕнчи Йăлкăш, Элĕк шкулĕсенчи çамрăк ăрăва тарăн пĕлӳ парса ĕçлерĕ. Малашне те çирĕп сывлăхпа иксĕлми вăй-хал, кунсерен ăнтăлу, ăнăçу, тулли телей сунатпăр Сире, хисеплĕ Альбина Юрьевна!

*Салампа пĕлĕшĕсем.*

✢ ✢ ✢

Комсомольски районĕнчи Хырай Ĕнел вăтам шкулĕнче тăрăшса ĕçленĕ **Галина Михайловна СЕРГЕЕВĂНА** çывхарса килекен çуралнă кунĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.

Галина Михайловна!
Саламлатпăр тантăшпа
Çепĕç, ăшă сăмахпа,
Аса илсе ырăпа.
Пире вĕрентрĕн шкулта
Анне пекех ăс парса.
Хăвăн ĕçне юратса,
Чун-чĕререн тăрăшса.
Куçупа чунтан савса,
Ятлама вăхăт пулман.
Ачасене ăнланса
Юлташ пулнă эс ялан.

Ырă чунлă пулнăран
Пирĕн асăмра тăран.
Кăмăлу та ылтăнах –
Пĕлтеретĕн савăнсах.
Малалла та çирĕп ут
Хурçă евĕр сывлăхпа.
Куçунта хаваслăх çут.
Пултăр ăнăçу санпа.
Паянхи çуралнă кун –
Чи асамлă, кĕтнĕ кун.
Хĕвел евĕр йăл кулса
Йышăн пирĕн салама.

*Саламлаканĕ Эсир вĕрентнĕ Светлана Зайцева (Николаева) тата унăн çемйи, кӳршисем.*

ТУСЛĂ КЛАСС

# Пĕри — пуриншĕн, пурте — пĕриншĕн!



Çак класра саккăрăн çеç вĕренеççĕ пулин те вĕсем тахçанах пур çĕрте те палăрма ĕлкĕрнĕ. Тăваттăмĕш класри Коля Лескин, Максим Арюхин, Валерия Рафинова, Владик Фролов, Настя Данилова, Маша Степанова, Катя Шишкова, Софья Кандыкова питĕ туслă пурăнаççĕ, вĕренӳре пĕр-пĕрне пулăшаççĕ. Вĕсем кашни мероприятие хастаррăн хутшăнса мала тухаççĕ. Вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пыраканскерсем шкулти пур конкурс-вăйăра та маттур. «Профессисен тĕнчи», «Кит», «Хăрушлăхсăр интернет», «Хаваслă старт» тата ытти чылай вăйăра тупăшаççĕ тăваттăмĕшсем. «Тăтăшах çĕнтерӳ туни пире малашне тата нумайрах тупăшма хавхалантарать», – теççĕ ачасем хаваслăн. Ача-пăча çапла тăрăшуллă пулни чи малтан камран килет-ха? Тĕрĕс, ашшĕпе амăшĕнчен тата класс ертӳçинчен. «Пирĕн ертӳçĕ чи лайăххи!» – пĕр-пĕрне пӳлсех калаçрĕç хастарсем учительсем пирки сăмах пуçарсан. «Ăна Вениамин Геннадьевич Сенаторов тесе чĕнеççĕ. Вăл пире яланах: «Лайăх вĕренни малашне питĕ кирлĕ», – тет. Кĕнеке нумай вулама сĕнет. Çавăнпа эпир каникулта та вырăс тата чăваш литературинчи хайлавсене тишкеретпĕр», – малалла пуплерĕç тăваттăмĕшсем.

Пур предмета та килĕштереççĕ вĕсем. Чи юратнисем вара физкультура, вулав урокĕ, технологи. Уйрăмах ĕç урокне кăмăлланине палăртрĕç ачасем. «Технологи урокĕнче эпир пластилинран тĕрлĕ кĕлетке, чĕрчун çыпăçтарса ăсталатпăр. Тата «лего» конструктортан машинăсем, самолетсем тăватпăр. Çак ĕçсемпе кунĕпех аппаланма хатĕр», – йăл кулаççĕ шăпăрлансем.

Шкулта кăна мар, пушă вăхăтра урамра та тĕл пулаççĕ тăваттăмĕшсем. Тĕрлĕ вăйă выляса вăхăта хаваслăн ирттереççĕ. Уйрăмах футболла тата волейболла выляма хавас. «Пĕри – пуриншĕн, пурте – пĕриншĕн!» девизпа пурăнаççĕ ахăртнех çак класра вĕренекенсем. Пĕр-пĕрне ăнланнине, хисепленине тĕпе хураççĕ вĕсем. Çитĕнсен кам пуласси не те палăртса хунă ĕнтĕ туслăскерсем. Настьăпа Катя, тĕлĕнмелле те, полици ĕçченĕ пуласшăн. Ахальтен мар ĕнтĕ физкультура урокне кăмăллаççĕ хĕрачасем. Максимпа Владик спецназ çарĕнче вăй хурасшăн ĕмĕтленеççĕ. Çавăнпа халех спортпа туслă, ăмăртусене те хаваспах хутшăнаççĕ. Валерия врач профессине алла илесшĕн. Хирург пулса чирлисене сыватас ĕмĕтлĕ вăл. Медицина енĕпе вĕренме кайсан нумай пĕлмелли, вуламалли те шиклентеремест ăна. Коля вара – шахтер е полици ĕçченĕ пуласшăн. Хальлĕхе вăл татăклăн калаймасть-ха. Анчах вăхăт иртсен хăш профессие суйласа илессинче иккĕленӳ пулмĕ тесе шухăшлать.

Мал ĕмĕтлĕскерсем хаçат тусĕсене те хăйсем пекех хастар пулма сĕнеççĕ.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

Çĕмĕрле районĕ, Хутар шкулĕ.

ПĔТĔМЛЕТӲ

# Суйлав çĕнтерӳçи — Марина

Районти территори суйлав комиссийĕ çумĕнчи çамрăксен суйлав комиссийĕ юпа уйăхĕнче «Суйлав» темăпа ӳкерчĕксен конкурсне ирттерессине çинчен пĕлтернĕччĕ. Ноябрĕн 15-мĕшĕнчен район администрацине пултаруллă ачасен ĕçĕсем çитнĕ.

Иртнĕ эрне пуçламăшĕнче конкурса ярса панă ӳкерчĕксене пăхса тухнă. Вырăскас Пикших вăтам шкулĕнче вĕренекен Марина Кирилловăн ĕçĕ пурне те килĕшнĕ, ăна çĕнтерӳçĕ ятне панă. Каракла шкулĕн воспитанникĕсем А.Безугловăпа В.Скворцова иккĕмĕш степеньлĕ Дипломсен хуçисем пулса тăнă. Виççĕмĕш вырăна Вăтапуç хĕрĕ А. Олипова тивĕçнĕ.

Тӳресем Ямаш, Уçырма, Янкăлч вăтам шкулĕсенче вĕренекенсен хастарлăхне палăртса хăварнă. Конкурса тăратнă ĕçсенчен Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн кунĕ тĕлне районăн тĕп библиотекинче курав йĕркелеме йышăннă.

***Виталий АЧЧА.***

Канаш районĕ.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1471 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 4664
Пичете декабрь уйăхĕн 3-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

АННЕСЕНЕ ЮРАТСА




ПĔР ШКУЛТАН ХЫПАРЛАÇÇĔ

## Чи хаклă çын

Кашни çыннăн чи малтанхи сăмахĕ – анне. Сăпкари ача та амăшĕн ăшшине, кăмăлне туять. Мĕншĕн тесен амăшĕ хăйĕн мĕн пур ăшшине, юратăвне ачине парнелет, ăна телейлĕ тăвассишĕн пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшать, пурнăçри йывăрлăхсене сирсе малалла талпăнать. Анне маншăн чи çывăх та хаклă çын. Ăна Надежда Николаевна тесе чĕнеççĕ. Мĕн астăвассах вăл шăллăмпа иксĕмĕре тĕрлĕрен вăйăсем выляттаратчĕ. Çапла майпа эпĕ саспаллисене паллакан, тĕрлĕрен ÿсентăрана, чĕрчунсене уйăракан пултăм. Анне маншăн пĕрремĕш учитель те. Шкула кайиччен вулама, çырма, шутлама вĕрентĕм. Çакă пĕтĕмпех ăна пула. Вăл мана илемлĕ кĕнекесем илсе паратчĕ, каçхине пĕрле вулаттăмăр, ÿкерчĕксем тăваттăмăр. Çывăрас умĕн яланах юмахсем вуласа ратчĕ. Унти сăнарсем урлă вăл пире ырăпа усала уйăрма вĕрентрĕ.

Манăн анне питĕ ĕçчен. Тĕрлĕрен апат-çимĕç пĕçерме ăста. Анне хатĕрленĕ апат мĕнле тутлă, кукăлĕсем кăпăшка. Уявсенче мĕн-мĕн кăна хатĕрлемест пулĕ! Тĕрлĕрен чечек ÿстерме те юратать. Çуллахи вăхăтра эпĕ хама юмах тĕнчине лекнĕ пекех туятăп. Мĕншĕн тесен анне лартнă чечексем пÿртре те, урамра та çеçкене лараççĕ, ырă шăршă сараççĕ. Хăйĕн пушă вăхăт çукпа пĕрех, апла пулин те пире кирек хăçан та пулăшма хатĕр. Эпĕ унăн чăтăмлăхĕнчен, ĕçченлĕхĕнчен тĕлĕнетĕп. Манăн анне çавăн пек маттур çын пулнишĕн хĕпĕртетĕп.

***Юлия ФЕОФАНОВА,***
***7-мĕш класс.***

Элĕк районĕ,
Шĕмшеш шкулĕ.

## Юрататăп пĕчĕк тусăмсене!

Пирĕн килте кушакпа унăн çури пурăнаççĕ. Иккĕшĕ те хура-шурă тĕслĕ. Асли – Маша, кĕçĕнни – Юр пĕрчи ятлă. Вĕсем эпĕ шкултан килессе алăк патĕнче кĕтсе лараççĕ. Пÿрте кĕрсен ман тавра чупса çÿреççĕ.

Кушакăмсем сĕт çиме юратаççĕ. Ман вырăн çинчех çывăраççĕ. Юр пĕрчи вара минтер çинех хăпарса выртать. Апат çисе килсен ман пата пырса икĕ уран тăраççĕ. Тав тăваççĕ пулинех.

Эпĕ хамăн пĕчĕк тусăмсене питĕ юрататăп!

***Аня ЮРКОВА.***

Куславкка районĕ,
Энтри Пасар шкулĕ.



## Нихăçан та ан чирлетĕр

Маншăн анне – çĕр çинчи чи хаклă, чи çывăх, чи хитре çын. Эпĕ унпа тем çинчен те калаçма пултаратăп. Вăл мана яланах ăнланать, каçарать. Унран нимĕн те пытармастăп, пĕтĕмпех тĕрĕссине калатăп. Анне кил таврашĕнчи ĕçсене пурнăçлама та хăнăхтарать: чашăк-тирĕк çума, яшка пĕçерме, пахчара çум çумлама. Хамăн чи çывăх та юратнă çыннăма питĕ-питĕ юрататăп. Аннеçĕм нихăçан та ан чирлетĕр, ан ватăлтăр.

***Мальвина ПЕТРОВА,***
***5-мĕш класс.***

Самар облаçĕ,
Шунтал районĕ,
Палантай шкулĕ.

## Кашни сăмахне итлетĕп

Манăн анне Валя ятлă. Эпĕ ăна пуринчен ытла юрататăп, ăна никампа та улăштармăп. Вăл мана кашни ир: «Хĕрĕм, ылтăнăм, тăма вăхăт, шкула каймалла», – тесе вăратать. Унтан таврăнсан вара кун мĕнле иртнине, мĕнле паллăсем илнине ыйтса пĕлет. Эпĕ аннене нихăçан та кÿрентерместĕп, шкулта «5» паллăпа çеç вĕренетĕп. Çывăх çыннăм мана ялан: «Хĕрĕм, тирпейлĕ çÿре, ырă кăмăллă пул», – тесе ăс парать. Эпĕ унăн кашни сăмахне итлетĕп.

Тата вăл питĕ тутлă пĕçерет. Кунран-кун ытларах ăнланатăп: манăн анне – чи лайăххи.

***Марина ДМИТРИЕВА,***
***5-мĕш класс.***

Самар облаçĕ,
Шунтал районĕ,
Палантай шкулĕ.

## Аннен ăшши пурне те çитет

Анне! Çĕр çинчи кашни çыншăн ăшă та çывăх сăмах. Тăватă саспаллирен çеç тăрать пулин те унра мĕн чухлĕ асамлăх!

Манăн анне Альбина ятлă. Вăл районти больницăра ĕçлет. Аттепе иккĕшĕ вунвиçĕ çул ĕнтĕ килĕштерсе пурăнаççĕ.

Хăш чухне çакăн пек шухăш та çуралать: «Мĕнрен тунă-ши аннен аллисене? Ылтăнранах-ши?» Пăрçăкан пек ĕçченскер эпир тăриччен ирех килти пур ĕçе пурнăçлать. Пире кăмăллăн сĕтел хушшине чĕнет. Мĕнле вĕреннине тăтăшах тĕрĕслет, урок тума та пулăшать. Манăн анне торт пĕçерме юратать. Уяв умĕн ку ĕçре эпĕ те пулăшатăп. Унран тĕрлĕ тутлă апат-çимĕç хатĕрлеме вĕренетĕп.

Кашни çулах эпир районта иртекен тĕпчев ĕçĕсен конкурсне хутшăнатпăр. Кунта та аннен çепĕç аллисем пулăшнипе йăва, мороженăй пĕçерессине тĕпчерĕмĕр, малти вырăна тухрăмăр.

Эпир чирлесен вăл ниçта кайса кĕреймест. Медицина ĕçченĕ пулнă май пире хăвăрт сыватать. Вăхăтра çырла, пыл, тĕрлĕ курăк чейĕсем ĕçтерет.

«Аннен ăшши пурне те çитет», – тесе ваттисем ахальтен каламан пуль. Çавăнпа та пирĕн чи çывăх çыннăмăрсене юратмалла, хисеплемелле, нихăçан та манмалла мар.

***Кристина ГРИГОРЬЕВА,***
***7-мĕш класс.***

Муркаш районĕ,
Кашмаш шкулĕ.

## Пушок – чи илемлĕ кушак

Манăн кушака Пушок тесе чĕнеççĕ. Вăл питĕ хитре, илемлĕ. Мĕншĕн тесен унăн куçĕсем симĕс, хăй хĕрлĕрех, урисем шурă, хăлхисем тĕттĕмрех тĕслĕ. Эпĕ Пушокпа выляма юрататăп. Урамра та уçăлса çÿреме кăмăллатăп. Унсăр мана часах тунсăх пусать. Пушокпа вара пĕрре те кичем мар. Вăл яланах манпа пĕрле пултăрччĕ!

***Александра ГОРЯЧОВА.***

Куславкка районĕ,
Энтри Пасар шкулĕ.

## Хакли тата мĕн пур-ши?

Тăван кĕтесрен, тăван тавраран хакли тата мĕн пур-ши? Çакна этем кăна мар, чĕрчун та пĕлет. Ăçта çитсен те чун çавах килте, тем парсан та тăван вырăнсенчен хакли нимĕн те çук.

Акă мĕн пулса тухрĕ. Пирĕн ялтан кÿршĕ салара пурăнакансем лаша илсе кайрĕç. Ялне çитиччен пĕр çирĕм çухрăм е ытларах та. Урхамаха машина çине тиесех парса ячĕç. Çакăншăн ман чун питĕ хурланчĕ. Кĕçех хăмламалли янаварччĕ вăл тата.

Вăхăт иртсен çак лаша çухалнă тесе пĕлтерчĕç. Санькка пиччене ятларĕç. Виçĕ-тăватă кун иртсен лаша пăхакан яланхиллех ир-ирех витенелле çул тытрĕ. Хăйĕн ĕç вырăнне çитсен çав урхамах тăнине курать. Тăлланăскер çирĕм çухрăма парăнтарса хăйĕн тăван килне килсе хăмлать. Çи-и-рĕм çухрăм тăлăпа сиксе килет пĕтĕ кĕсре! Çирĕм çухрăма çĕнтерет тăван килне çитес тесе! Çакна курсан Санькка пиччен куçĕнчен куççуль юхса анать. Ара, вăл лашасене хăй ачисене пăхнă пек çитĕнтерни вĕт, пăшăрханасси те çавнашкалах пулнă. Лаша çухалнăранпа вăл пĕр каç та çывăрайман. Халь тинех ĕнтĕ тупăннă! Тÿрех вылькăха çухатнăскерсем патне шăнкăравласа пĕлтерчĕ.



– Пĕрре вырăнне иккĕ парса яратăп, – тесе кулкаларĕ Санькка пичче лашасене илме килсен.

***Кристина БАЙБАТОРОВА.***

## Тавах сана аннеçĕм

Анне... Çак тăватă саспаллинче мĕн тери ырă та ăшă туйăм палăрать. Туятăп, сан чĕрÿ те кăшт хытăрах тапа пуçларĕ хăватлă та çак ăшă сăмаха илтсе. Эп сан пекех вĕри, таса чĕреллĕ, анне тени кашниншĕн вăл пĕрре.

Аннеçĕм мар-и пĕрремĕш хут хыптарнă кăкăр, ÿстернĕ ... лăпкаса, юрланă ман валли сăпка юрри?! Халь маншăн тÿпери вутран та сутă çăлтăр вăл анне тени. Ахальтен мар пирвайхи сăмахăм пулнă-тăр шăпах «анне».

Кунсем, çулсем иртеççĕ сисĕнмесĕр, эпир те çитĕнсех пыратпăр. Часах тăван килтен тухса кайса пурнăç çулĕ çине тăратпăр. Çавăратпăр çемье, çитĕнтеретпĕр ача-пăча. Эпĕ тăван килтен тухса кайнăранпа сахал та мар, нумай та мар, шăп сакăр çул иртрĕ. Темле пулсан та эпĕ пĕлетĕп: тăван килте юратнă çыннăм кĕтет, маншăн пăшăрханать, яланах пулăшма тăрăшать. Инкек-синкек сиксе тухать-и е хуйхă-суйхă канăç памасть – сисетĕп эпĕ, сисетĕп сан хура çÿçÿ кулянни пех шуралчĕтĕр. Аннеçĕм, мĕнпе сана эп пулăшам-ши, мĕнле упрам-ши сывлăхна? Мĕнле сăмах тупса калам-ши чунна йăпатма?

Шăматкун каçхине эс кĕтетĕн мана килте кăмакаран тин çеç пиçсе тухнă техĕмлĕ кукăльпе. Ирпе яратăн ăсатса ял хапхи таран. Телей сунса пехиллетĕн ăсатнă чух инçе çула. Макăрас марччĕ тесе ăшшăн йăл кулатăн, сана йăпатма эп тăрăшатăп. Хирĕç нимĕн те шарламастăн, ассăн çеç сывлатăн.

Ларсассăн хурçă ут çине яратăп куççулĕме эп ирĕке. Анне сăнарĕ ман умра, тухмасть вăл асăмран. Туртăнать-çке чун тăван киле, кая килмест унтан. Каллех ача чухнехилле, ларасчĕ сан чĕрçÿ çине, выртасчĕ ытамунта, ачаш сассупа киленсе...

Ытарайми анне, аннеçĕм... асран тухмасть ырă кăмăлу. Пире юратса ÿстертĕн эсĕ, сан ир те каç пулман кану. Асăмран тухас çук нихăçан та йăл куллу.

Пул ĕмĕр çамрăк эсĕ, нихăçан ан таталтăр çулу. Эп ĕмĕр упрăп сăнна, санпа телейлĕ ман кун-çул.

Анне, чи ăшă сăмахсем те, чи хаклă парнесем те çителĕксĕр пулĕ сана тав тума. Ĕмĕр-ĕмĕр парăмра эп сан умра.

Çакă çутă тĕнчере пурăннишĕн, кашни кунах сар хĕвел ăшшипеле киленнĕшĕн эпĕ питĕ савăнатăп. Çакăншăн, анне, сана тав тăватăп!

***Алина ТРОФИМОВА,***
***вĕрентекен.***

Вăрмар районĕ, Шăхаль.

# Сочинени çыратпăр

**Шкултан вĕренсе тухма хатĕрленекенсем ĕнер яваплă тĕрĕслев витĕр тухрĕç – вырăс литературипе экзамен тытрĕç. Мĕн енчен лайăх-ши вăл? Тата мĕнле сăлтава пула пуçарса янă çак ĕçе?**



*ЧР Вĕренÿ министерĕн пĕрремĕш заместителĕ Светлана Владимировна Петрова пĕлтернĕ тăрăх, тĕп сăлтав – ачасен çыру ĕçне лайăхлатасси.*

– Вĕренекенсем хăйсен шухăшне уçăмлăн çырса кăтартаймаççĕ тата чылай йăнăш тăваççĕ, сăмахсене кĕскетеççĕ. Ку халĕ кĕсье телефонĕсемпе те, интернет тапхăрĕпе те çыхăннă ĕнтĕ, – ăнлантарать Светлана Владимировна.

Республикăри 304 шкулти ултă пин ытла вĕренекен хутшăнчĕ çак гуманитари, филологи енĕпе вĕренме каясшăн е пултарулăх специальноçне алла илесшĕн, сочинени вĕсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Çĕмĕрле районĕнчи Хутар шкулĕнчен кăçал вĕренсе тухакансемшĕн ку çĕнĕлĕх пысăк йывăрлăх кăларса тăратман. Диана Михайлова, тĕслĕхрен, куçаруçă пулма ĕмĕтленет, ют чĕлхе факультетне вĕренме кĕресшĕн. Журналист пулас тĕллев лартнă Лена Сорокина та çак çĕнĕлĕхе ырлать. Çав вăхăтрах ку тĕп экзаменсене хатĕрленме кăштах чăрмантарнине экзамена. Уйăрнă 235 минутра ачасен 250-ран сахал мар сăмахлă текст çырмалла пулнă. Пĕрле ручка тата орфографи словарĕ çеç илсе кĕме ирĕк панă.

> **Ăнăçлă сочинени çырайманнисен тепĕр икĕ шанăç пур: февралĕн 4-мĕшĕнче е майăн 6-мĕшĕнче ĕçе çĕнĕрен пурнăçлама пултарĕç вĕсем.**

Палăртса хăвармалла, икĕ пĕр пек сочинени пулсан çырса илекеннин тата çыртарса илтерекеннин ĕçĕсене шута илмессине пĕлтернĕччĕ. Ача хăйĕн шухăшне уçса пани – тĕп ырăнта.

Ку вĕренÿ çулĕнче сочинени çыракансене йывăрах лекмен-ха, мĕншĕн тесен çак çĕнĕлĕх пирки шкулсене каярах юлса пĕлтернĕ. Çитес çулсенче вара шкултан вĕренсе тухакансенчен çирĕпрех ыйтĕç.

Сочинение лайăх çырни ачана аслă шкула вĕренме кĕнĕ чухне ытларах балл илме май парать. Çавăнпа та кам те палăртать.

Маттур хĕрачасене нимĕнле экзаменпа та хăратаймăн. Мĕншĕн тесен вĕсем вĕренÿре малта пыракансен йышĕнче, алăран кĕнеке ямаççĕ. Уроксенче те вăхăта ирттермелле çеç лармаççĕ, кашни темăна тăрăшса ăса хываççĕ. Çавăнпа хăйсен пĕлĕвне шанаççĕ те.

– Вĕренÿре тимлĕ пулмалла. Нумай пĕлекене, паллах, темĕнле çирĕп экзаменпа та хăратаймăн, – тет Лена.

Пĕрремĕш тĕрĕслеве çăмăллăн парăнтарнисем халĕ пĕрлĕхлĕ патшалăх экзаменĕсене хатĕрленеççĕ. Кашниех хăй палăртса хунă çулĕпе çирĕппĕн утасшăн. Эппин, шкултан вĕренсе тухакансен алă усса ларма вăхăт çук-ха.

*Лариса ПЕТРОВА.*

# Вĕренес текеншĕн йывăр пурнăç чăрмав мар

**Телее ĕçре шыра.**
***(Ваттисен сăмахĕ.)***

Çурхи тĕнче вăраннă чух чун çĕкленнипе пуласлăх çинчен шухăша каятăп. Мĕнлерех-ши вăл? Эпĕ пуласлăхра Тăван çĕршывăн пархатарлă ывăлĕ пулăп-ши? Хам хыççăн çĕр çине мĕнле йĕр хăварăп-ши? Çак шухăшсем пĕр вĕçĕмсĕр канăç памаççĕ, хумхантараççĕ. Анчах та канăçсăрланнипе хумханни кăна çителĕксĕр. Эпĕ – çĕршыв пуласлăхĕ. Апла пулсан манăн ĕмĕтĕме ĕçпе пурнăçа кĕртмелле. Куллен тăрăшса вĕренни, тĕрлĕ ĕç ăсталăхне алла илсе пыни пурнăçра сулмаклă утăмсем тума май парать.

Кирек кам та малашлăх çинчен ĕмĕтленет, ырă пурнăç йĕркелеме тăрăшать. Унсăрăн тĕнче пурнăçĕ пĕр вырăнта тăнă пулĕччĕ. Анчах телейлĕ малашлăх хатĕр выртмасть. Ăна пирĕн хамăрăнах тупмалла, ĕçлесе тумалла. Çавăнпа эпĕ ÿссен кукаçи пек пуласшăн. Вăл маншăн яланах тĕслĕх, урăхла каласан – идеал.

Юратнă кукаçи, Валентин Сергеевич Наумов, 1940-мĕш çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче Шаран районĕнчи Виç Çăл ялĕнче çуралнă. Хаяр вăрçă вăхăтĕнче çемье ашшĕсĕр тăрса юлнă. Кукаçин пĕчĕкренех хуçалăх ĕçĕсене кÿлĕнме тивнĕ. Йывăр пурнăçа пăхмасăр тăрăшса вĕреннĕ вăл. Малтан тăван ялĕнчи пĕлÿ çуртне çÿренĕ, унтан – Чекмагуш районĕнчи Митро-Аюп ялне. Вăтам шкултан вĕренсе тухсан вăл Октябрьск хулинчи техника училищинче слесарь ĕçне алла илнĕ. Мĕн çара кайиччен тата çартан таврăнсан та специальноçĕпе ĕçленĕ. 1962-65-мĕш çулсенче Совет çарĕнче тăнă. Кукаçи 1966-мĕш çулта Бирск хулинчи педагогика институтĕн биологи факультетне кусăмсăр майпа вĕренме кĕнĕ. Çав вăхăтрах тăван тăрăхне таврăнса пĕрлештернĕ хуçалăхра ĕçлеме пуçланă. Тăрăшса ĕçленине тата вĕреннине кура ăна агроном ĕçне шанса панă. Каярахпа ялхуçалăх институтĕнче те аслă пĕлÿ илнĕ. Нумай çул агрономра тăрăшнă. 1988-мĕш çултан пуçласа пенсие тухиччен Виç Çăлти вăтам шкулта ĕç урокĕ ирттерет. Ачасене пахча ĕçĕн ăсталăхне алла илме пулăшать. Шкул садне илемлетес тесе мĕн чухлĕ вăй хурать! Чăнах та, шкул сачĕ такамăн кăмăлне те çĕклет. Çавăн чухне килĕнче те çĕнĕ ĕçпе хавхаланса каять. Ку вăл – çамрăк хунавсем ÿстересси. Çак темиçе çулта вăрăран миçе пин улмуççи, груша хунавĕсем çитĕн-термерĕ-ши? Вăхăт çитсен вĕсене паха çимĕç паракан йывăçсен турачĕсемпе сыпать. Мана та çак ĕç вăрттăнлăхĕне тĕплĕн паллаштарать. Кунта мĕн чухлĕ вăй, чăтăмлăх кирлĕ тата! Кукаçи пăхса ÿстернĕ хунавсем таçанах тутлă çимĕçпе савăнтараççĕ. Тав тăваççĕ ăна çынсем, татах та çĕнĕ сортлă хунавсем ÿстерсе пама ыйтаççĕ. Кукаçи пулăшу ыйтма килекен çынсене таврат кĕтсе илет, ырă канашсем парать. Пирĕн килте те вăл парнеленĕ улмуççисем, грушăсем, сливăсем, чиесем, хурлăхансем ÿсеççĕ. Çулсерен вĕсем турат çĕклейми çимĕç кÿрсе савăнтараççĕ.

Кукаçи сад ĕçĕсĕр пуçне пысăк хуçалăх та тытать. Выльăх-чĕрлĕх йышлă ĕрчетет. Вĕлле хурчĕ пăхаканскер çулленех пире тутлă пылпа хăналать. Хуçалăха тытса пыма çăмăлрах пултăр тесе вĕр çĕнĕ трактор илсе ячĕ. Кашни çулах пирĕн пахчана сухаласа парать. Утă-улăм кÿмелле пулсан та тÿрех унран пулăшу ыйтатпăр. Мана тракторпа çÿреме те вĕрентме шантарчĕ. Хăçан та пулин эпĕ те кукаçи пек руль умĕнче ларăп, тăрăшса çĕр сухалăп, утă çулăп...

Халĕ кукаçи пилорама та туянчĕ. Ял халăхĕ çĕнĕ çурт-йĕр çавăрнă чухне пилорамăсăр май çук.

Кукаçи – аслă, ĕçчен те ырă кăмăллă çын. Вăл 74 çулта пулсан та кунĕн-çĕрĕн ĕçлет. Этем ăс-хакăлне, кăмăл-туйăмне çутçанталăк саккунĕсемпе килĕштерсе пурăнакан çын вăл. Пире те, мăнукĕсене, çавăн пек пурăнма вĕрентет.

Кукамайпа, Людмила Владимировнăпа, виçĕ ача пăхса çитĕнтернĕ. Вĕсем тĕпренчĕкĕсене те ĕçчен, аслă пулма вĕрентнĕ. Аслă ывăлĕ, манăн Володя кукка, хăйĕн çемйипе Октябрьск хулинче пурăнать. Вăл – йăла техникине юсакан ăста. Мăшăрĕпе пĕрле икĕ ача, ывăлпа хĕр, çитĕнтереççĕ. Вăталăххи – хĕр, вăл манăн анне, Валентина Валентиновна. Анне кукаçи çулĕпе кайнă, Бирск хулинчи педагогика институтĕн химипе биологи факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Чекмагуш районĕнчи Юмашри вăтам шкулта биологи предметне вĕрентет, çав вăхăтрах организатор ĕçне пурнăçлать. Çемьере икĕ ача ÿстерет: эпĕ тата йăмăкăм Алена. Кĕçĕнни, Валери кукка, хăйĕн çемйипе тăван ялĕнче пурăнать, пĕр ывăл ÿстерет. Вăл Ĕпхÿри педагогика институтĕн физкультура факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Хальхи вăхăтра Виç Çăлти вăтам шкулта вĕрентекен пулса ĕçлет. Вăл тăрăшнипе ачасем спорт ăмăртăвĕсенче пысăк çитĕнÿсем тăваççĕ. Районта кăна мар, республика шайĕнчи ăмăртусенче те малти вырăна тухаççĕ. Эпĕ кукка çитĕнĕвĕсемшĕн савăнатăп. Час-часах пирĕн шкулсем пĕрле ăмăртусем ирттереççĕ, çавна эпир пысăк уяв пекех кĕтетпĕр.

Кукаçин пархатарлă ĕçне хакласа ăна 1984 çулта «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе чысланă.

Кукаçи – таса чĕреллĕ çын. Вăл кирек кам хуйхине, савăнăçне лайăх ăнланать, çынна инкекрен çăлма яланах хатĕр. Эпĕ ăна юрататăп, хисеплетĕп, ырă сăмахсемпе чунне ăшăтма, йывăр ĕçре пулăшу кÿме тăрăшатăп. Манăн та кукаçи пек вĕренÿре те, ĕçре те, пурнăçра та хастар пулас килет.

*Алексей ЕРМОЛАЕВ.*

Пушкăртстан,
Чекмагуш районĕ,
Юмаш шкулĕ.

САВӐНӐҪ

# Юрла, Катя, юрла, е юрӑ — туйӑмсен сасси

**Юрӑ – халӑх пурнӑҫӗн ҫутӑ тӗкӗрӗ. Илемлӗ те ҫепӗҫ юрӑ ӑшӑ калаҫуран та ҫӑмӑлраххӑн юхать. Сӑмахпа калайман шалти ӑшри шухӑш-туйӑма вӑл уҫҫӑн пӗлтерет. Юратнӑ юрра юрласа ярсан ҫын лӑпланать, чӗри ыратни те, тунсӑх пусарса тӑни те манӑҫать. Юрӑпа юлташлӑ ҫын ырӑпа юлташлӑ теҫҫӗ.**



### Юрӑра — хӗвеллӗ ҫу кунӗ

Кӑҫал ҫулла июнь-июль уйӑхӗсенче ачасен тата ҫула ҫитнисен куҫӑн мар майпа пӗтӗм Раҫҫейри «Мелодинка» вокал тата музыка конкурсӗ пулса иртрӗ. Унта «Эстрада вокалӗ» номинацире Шупашкарти 137-мӗш ача садне ҫӳрекен ҫичӗ ҫулти Екатерина Барсукова лауреат ятне тивӗҫнӗ, иккӗмӗш вырӑн йышӑннӑ. Вӑл «Дед Мороз и лето» мультфильмри «Песенка о лете» юрӑ шӑрантарнӑ. Юрӑ сӑмахӗсене Юрий Энтин поэт, кӗввине Евгений Крылатов композитор ҫырнӑ.

Конкурса 15 номинаципе 24369 юрӑҫ хутшӑннӑ май ҫӗнтерӳҫӗсене октябрь вӗҫӗнче ҫеҫ палӑртма ӗлкӗрнӗ-мӗн. Ырӑ хыпар пуриншӗн те пысӑк савӑнӑҫ. Культура ҫулталӑкӗнче ҫакнашкал ҫитӗнӳ туни ача садӗнче музыка ертӳҫипе Лилия Радиковна Сафинӑпа аслӑ ушкӑнри ачасен воспитательне Ирина Владимировна Ярутковӑна уйрӑмах савӑнтарчӗ.

– Кӑҫалхи ҫуркунне те Катьӑна «Мама» юрӑ юрлаттарса пӗтӗм Раҫҫейри «Талантоха» пултарулӑх конкурсне хутшӑнтартӑмӑр, – терӗ Ирина Владимировна. – Ҫӗнтерчӗ, «Юрӑ тата музыка пултарулӑхӗ» номинацире виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнчӗ. Ку пирӗн йыша ҫӗнӗ хавхалану пачӗ. Ача садӗнчи кашни ушкӑнра юрӑсем ҫӗкленӳллӗн янӑрама пуҫларӗҫ. Катя та Лилия Сафина пулӑшнипе хӑйӗн ӑсталӑхне малалла ӳстерсе пычӗ. Маттур, питӗ маттур. Тантӑшӗсене ырӑ тӗслӗх кӑтартать, кӗвӗ-ҫемӗпе килӗшӳллӗн васкамасӑр та ҫепӗҫҫӗн юрлама хавхалантарать.

Ача садӗнчи музыка ертӳҫи Лилия Рафиковна Сафина аслӑ ушкӑнри Катя Барсукова нумай юрӑ юрлама пӗлнишӗн питӗ кӑмӑллӑ.

– «Песенка о лете» юрра эпир ушкӑнра икӗ ҫул каялла ҫу кунӗсенче юрлама пуҫларӑмӑр, – терӗ вӑл. – Ӑшӑ юрӑ. Ачасене питӗ килӗшрӗ. Сӑмахӗсем ансат, ӑнланмалла. Кӗвви те ҫӑмӑл, ҫемҫе, пӗр кӑлтӑксӑр юхать. Унашкал юрӑсене ачасене вӗрентме те чӑрмавлӑ мар. Катя унӑн кашни сӑмахне ӑнланса, чӗри патне питӗ ҫывӑха илсе юрланипе палӑрчӗ. Иртнӗ кӗркунне республикӑри ачасен «Талантсен фейерверкӗ» конкурсра ӑна юрласа виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнчӗ. Кӑҫал ҫулла Ирина Владимировна Катя ҫак юрра юрланӑ чухне кӗвӗ ҫеммипе хӑйне килӗшӳллӗ тыткаланине, пур хусканӑвӗсем те вырӑнлӑ пулса пынине палӑртрӗ. Ҫаплипа вара «Песенка о лете» юрӑ пӗтӗм Раҫҫейри «Мелодинка» конкурса хутшӑнчӗ.

Сип-симӗс тавралӑх. Тӳпере ирхи хӗвелӗн ылтӑн урапи хуллен кусать. Ыраш пуссинче ҫил ачи пучахсем шутлать. Кӑшт пӗчӗк хусканурах кашни пучах хӑй майлӑ кӗвӗ тупать тата. Кӑн-кӑвак утмӑлтурат чечекӗсем кӗмӗл сывлӑм тумламӗсене тӑкаҫҫӗ. Юмахри пек тавракурӑм ӗмӗт тӗнчине уҫать. Юрла, Катя, юрла! Ҫутҫанталӑк юрӑҫ кӑмӑлӗпе ҫураҫуллӑ-ҫке.

*Вот оно какое, наше лето,*
*Лето яркой зеленью одето,*




*Лето жарким солнышком согрето,*
*Дышит лето ветерком.*

Чунри пӗтӗм хумханӑва пусарӑнтарса юрӑн пӗр куплетне юрланӑ ӗнтӗ. Халӗ ҫӑмӑллӑн сывласа ямалла та, кӑвак кӗпепе килӗшӳллӗ хусканусем туса, хушса юрламаллине ирӗке кӑлармалла.

*Ля-ля-ля ля-ля-ля*
*Ля-ля-ля-ля-ля ля-ля-ля-ля*
*Ля-ля-ля ля-ля-ля*
*Ля-ля-ля-ля-ля ля-ля...*

Сар хӗвел ҫӗкленнӗҫемӗн уҫӑлса пырать инҫет. Акӑ унӑн хӗлхемӗ вӑрман катинчи ҫулҫӑсем ҫинче ҫиҫме пуҫларӗ. Сукмак хӗррипче симӗс шапасем сиккелеҫҫӗ. Унта та кунта лӗпӗшсем мӑшӑррӑн ташлаҫҫӗ. Ӗшнери пин-пин чечек пуҫ тайса савӑнать.

*На зеленой солнечной опушке*
*Прыгают зеленые лягушки.*
*И танцуют бабочки-подружки,*
*Расцветает все кругом...*

Ӑшӑ юрӑ. Ҫиччӗри юрӑҫӑн пит-куҫӗ кашни ҫаврӑм пуҫламӑшӗнче ҫиҫсе ҫуталать. Йӑл кулӑ палӑрса илет. Сӑвӑри кашни сӑмах чӑнлӑх куҫӗпе тап-таса. Юрӑ ҫепӗҫҫӗн янӑраса вӑй илет те пӗтӗм чуна килентерет. Юрӑҫӑн йӗс шӑнкӑрав пек сассин хумӗ итлекенсен чунӗсене сӗртӗнет. Хӑй те ҫут ҫанталӑк ытамне лекнӗн, хӗвел айӗнче вӑрман хӗррипе утнӑн туять.

Юрлать Катя, юрлать, киленсе юрлать.

### Юрӑ — туйӑмсен сасси
(кӗске интервью)

**– Катя, хӗвеллӗ ҫу кунне савса юрлакан юрра мӗншӗн суйласа илнӗ эсӗ?**

– Пачах суйламан ӑна. Малтан ача садӗнче хамӑр ушкӑнра темиҫе хутчен юрланӑччӗ. Мана сӑмахӗсем питӗ килӗшрӗҫ. Кӗвви те. Пирӗн валли – ачасем валли ҫырнӑ ӑна. Пӗрре ҫапла кукаҫи ҫуралса ӳснӗ яла кайрӑмӑр та – вӑрмана кӗтӗмӗр. Кунӗ ӑшӑ, пӗлӗтсӗр. Хӗвел пӑхать, вӑштӑр-вӑштӑр ҫил вӗрет те чечексем хумханаҫҫӗ. Хитре кайӑксем вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ. Темшӗн юрламаҫҫӗ. Йывӑҫсем ҫинче мӑйӑрсем курӑнаҫҫӗ. Эпӗ сукмакпа алӑсене сулкаласа утнӑ май хам тӗллӗнех ҫак юрра тӑсса янӑ иккен. Чӑтаймарӑм вӗт. Кукаҫипе кукамай мана курса шалт тӗлӗнсе кайнӑ – алӑ ҫупса тӑраҫҫӗ. Маншӑн савӑннӑ. Ҫавӑн пек пысӑк телейӗн ялан юрласӑм килет.

Юрлатӑп та. Вунпилӗк юрӑ пӗлетӗп. Атте-анне ирӗк парсан, телевизорпа мультфильмсем пӑхатӑп. Унта артистсем юрӑ юрласан, эпӗ те пӗрле юрлатӑп. Кӑҫал ӑнсӑртран «Дед Мороз и лето» мультфильм та куртӑм. Мӗн тери савӑнӑҫ! Юрларӑм паллах.

*Лето, лето жаркое недаром,*
*Лето это хорошо.*

**– Ҫапах та сана мӗнле юрӑсем килӗшеҫҫӗ?**

– Ушкӑнпа юрламаллисем. Анчах юрӑсен сӑмахӗсене тупма питӗ кансӗр. Эпӗ нумай хулара ҫав шутра Мускаврa, Хусанта, Анапӑра, ют ҫӗршывсенче – Египетра, Турцире, Кипрта пулнӑ. Вӗсем ҫинчен те юрлас килет. Ют чӗлхесем вӗренмелле. Питӗ илемлӗ тӑрӑхра пурӑнатпӑр эпир. Пирӗн енче пӗлтӗсем те тӳлек, ют ҫӗрте вӗсем – ҫапкаланчӑк. Тата йӗри-тавра тинӗс те тинӗс...

**– Халӗ мӗнле шухӑш-ӗмӗтпе пурӑнатӑн, Катя?**

– Калама та пӗлместӗп. Шупашкарти 2-мӗш вӑтам шкулта пӗрремӗш класра вӗренетӗп. Коля пиччепе пӗрле ҫӳретӗп. Манӑн ранец питӗ йывӑр. Пичче ҫиччӗмӗш класра пӗлӳ илет те ӑна ҫӗклесе пулӑшать.

Унтан килетӗп те Степан Павлов ячӗллӗ музыка шкулне чупатӑп. Фортепиано уйрӑмӗнче пӗрремӗш класра вӗренетӗп. Ҫавӑн пекех чустаран тӗрлӗ кӗлеткесем ҫыпӑҫтарса ӑсталамалли «Соленое тесто» кружока ҫӳретӗп. Пур ҫӗрте те лайӑх вӗренетӗп. Юрлатӑп та, пианино та калатӑп. Пӗр ӗмӗт – вӗренмелле, вӗренмелле...

Кӗркуннехи каникул кунӗсенче ҫеҫ ҫӑмӑллӑн сывласа ятӑм. Ҫапах та асаннепе пӗрле хам ӳссе ҫитӗннӗ 137-мӗш ача садӗнче пӗр кун ирттертӗм. Тунсӑхланӑ вӗт. Тантӑшсене кӗнеке вуласа патӑм, хам вӗренекен шкулсен пурнӑҫӗпе паллаштартӑм. Мана юрлама вӗрентнӗ Лилия Рафиковнӑна тата юратнӑ воспитательне Ирина Владимировнӑна тав турӑмӑр.

**– Пултарулӑх ӗҫӗнче ӑнӑҫусеем, вӗренӳре ҫитӗнӳсем сунатӑп, Катя. Тавтапуҫ.**

***Герман ЖЕЛТУХИН.***

ЧУНРИ

# Вӑл пурри – телей

Анне! Ытарайми ҫыннӑм! Ытла та илемлӗ эсӗ, ытла та кӑмӑллӑ. Чунунти пур лайӑх енне пире халаллатӑн, куллен телей пиллесе пурӑнма вӗрентетӗн.

Аннеҫӗм! Эсӗ мана ҫут тӗнчене кӗлчен варунта тӑхӑр уйӑх йӑтса ҫӳрени, ырӑ-сывӑ ҫуратас тесе упраса-сыхласа пурӑннӑ. Кашни кун юратса тӗрек панӑ, кӑмӑллӑ та ӑшӑ куҫупа ачашшӑн ҫупӑрланӑ, йӑвашшӑн, ҫепӗҫҫӗн пуплесе йӑпатнӑ...

Миҫе каҫ ҫывӑрман-ши тата эсӗ! Эпӗ кӑшт нӑйкӑшма пуҫласанах ман пата чупса пынӑ, юрӑ юрласа лӑплантарнӑ, ҫитернӗ, тасатнӑ, ҫунӑ... Ҫулталӑка ҫитсен ура ҫине тӑратса пӗрремӗш утӑмсем тума пулӑшнӑ. Калаҫма вӑхӑт ҫитсен чӗкеҫ чӗлхи пилленӗ. Ача пахчине ҫӳреме пуҫласан манӑн кашни ӳсӗмшӗн, пултарулӑхшӑн чунтан савӑннӑ, мана ӑслӑ та илемлӗрех тӑвасшӑн ҫуннӑ. Хитре кӗпе-тумтир, капӑр тетте, ӑслӑ кӗнеке илсе парса хавхалантарнӑ. Кунсерен, каҫсерен эсӗ ача пахчинӑ мана илме пыни халӗ те асрах. Сана курсанах эпӗ хирӗҫ ыткӑнаттӑм. Эсӗ мана ыталаса ҫупӑрлаттӑн, ҫурӑмран лӑпкаттӑн, пуҫран ачашлаттӑн...

Шкул ҫулне ҫитсен ӑслӑ-тӑнлӑ ҫын пулма вӗрентӗр тесе пӗтӗм вӑй-хална паратӑн эсӗ. Килте е урамра мӗнле те пулин ыйту, татса параймасан шухӑш-тӗллев ҫуралсанах сан патна чупса пыратпӑр, канаш-сӗнӳ ыйтатпӑр. Аннеҫӗм! Эсӗ пирӗнтен ҫын тума тӑрӑшатӑн. Пире нихӑҫан та усал сунмастӑн. Ҫӗршыва юрӑхлӑ, ӑслӑ та пултаруллӑ, таса чунлӑ, ырӑ кӑмӑллӑ тӑвасшӑн. Ҫав вӑхӑтрах эсӗ пире хӑвӑнтан телейлӗрех, савӑнӑҫлӑрах, пуянрах пурӑнтарасшӑн. «Амӑшӗн пехилӗнчен тухаканӑн пархатарӗ ҫук», – тесе ахаль каламан. Ҫавӑнпа эпӗ те сан сӑмахна куллен ӑса хывма тӑрӑшатӑп. Сан пек сӑпайлӑ, вашават, ӗҫчен пулма ӗмӗтленетӗп.

Анне пурри – телей. Хамӑн тантӑшсене, тусӑмсене чӗнсе каласшӑн. Упрӑр аннӗрсене, хисеплӗр. Ҫӗр ҫинче вӗсенчен хакли нимӗн те, никам та ҫук. Тем чухлӗ укҫа парсан та эпир вӗсене туянаймастпӑр. Ҫавӑнпа та чи ҫывӑх та хаклӑ ҫынсене ырӑ ӗҫсем туса савӑнтарасчӗ, усал ӗҫсем туса хурлантарас марччӗ. Пурнӑҫ малаллах шӑвать, эпир ҫитӗнетпӗр, анне ватӑлать. Вӑл панӑ чун ӑшшине пирӗн каялла пин хут ытларах тавӑрса памалла. Эпир анне умӗнче пысӑк парӑмра.

***Никита НИКИТИН,***
***8 класс.***

Элӗк районӗ,
Шӗмшеш шкулӗ.

# Чи хастаррисем те маттуррисем!



Чăваш Республикинче 9 хула. Куславкка çак йыша 1967 çулта кĕнĕ. Чăваш Енри чи çамрăк хуласенчен пĕри вăл. 1901 çулта кăларнă «Россия. Полное географическое описание нашего Отечества. Среднее и Нижнее Поволжье и Заволжье» кĕнекере ăна деревня Козловка тесе палăртнă. Авалхи хутсенче сельцо Козловка тени те тĕл пулать, мĕншĕн тесен Козловка ялĕпе Богородское (е Белая Воложка) сали тата темиçе ял пĕрлешнĕ. Официаллă вара Куславкка 1671 çулта никĕсленнĕ шутланать. Ĕлĕк ăна «чăх çăмарти пристанĕ» тесе те каланă. Миллионшар çăмарта пуçтарнă кунта, вĕсене Англи таранах ăсатнă. XIX-XX ĕмĕрсенче Куславккара виçĕ причал ĕçленĕ.

Хула çумĕнче тĕнчипе паллă математик Н. И. Лобачевскийĕн именийĕ те пур. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Куславккара десант планерĕсене кăларнă. 1943 çулхи çуркуннерен вара По-2 (У-2) самолетсене те тума тытăннă. Никифор Мранькан «Ĕмĕр сакки сарлака» роман-эпопеи шăпах Куславкка таврашĕнчи чăвашсен пурнăçне сăнарлать.

Эпир вара çак кунсенче Куславкка ачисемпе тĕл пултăмăр. «Тантăш» тусĕсене хăйсен туслă класĕпе паллаштарас терĕç вĕсем. Хаваспах сăмах паратпăр маттурсене.

– Тантăшсем, эсир пирĕн тăван хулара пулса курнă-и? Ахăртнех, илтнĕ кăна пуль. Куславкка Атăл хĕрринче, çўллĕ çыранра вырнаçнă. Çутçанталăк ытамĕнчи тăван хула илемлĕ вырăнсемпе пуян.

Атăл тепĕр енче – Мари Эл Республики. Тутарстан Республикин çĕрĕсем те кўршĕллех. Виçĕ республика чиккинче пурăнатпăр эпир. Куславккаран 10 çухрăмра чукун çул иртет, Çĕпĕре тата Инçет Хĕвелтухăçне Мускавпа çыхăнтарать вăл. Хулапа юнашар патшалăх пĕлтерĕшлĕ Мускав-Чулхула-Хусан аслă çул (М-7) выртать.

Эпир Куславккари 3-мĕш вăтам шкулта, 5-мĕш класра вĕренетпĕр. Тĕнчери чи туслă класра 25 ача, пурте маттур та хастар. Ăмăртусене, олимпиадăсене хаваспах хутшăнатпăр, малти вырăнсене тивĕçетпĕр.

Пирĕн иккĕмĕш анне, класс ертўçи – Татьяна Викторовна Каримова. Пирĕншĕн мĕнле тăрăшать вăл, чунне пама хатĕр! Эпир вăл мĕнле çунса тăнине куратпăр та – тата та аванрах вĕренме, хамăра тата та лайăхрах тытма тăрăшатпăр.

Пирĕн пирвайхи учительница – Лилия Михайловна Шаготова. Ўснĕçемĕн эпир ăна ытларах та ытларах тав тăватпăр. Шкула çўреме тытăнсан, 1-мĕш класра эпир нимĕн те пĕлместĕмĕрччĕ тесех йышăнмалла. Лилия Михайловна вулама, çырма, шутлама çеç мар, хамăра шкул ачи пек туйма, тытма вĕрентрĕ. Эпир ăна чĕререн тав сăмахĕ калатпăр.

Тантăшсене савăнса (кăштах мухтанса!) çакна та пĕлтерер: хулара пурăнатпăр пулин те чăваш чĕлхи урокĕсене питĕ кăмăлласа çўретпĕр. Чăваш чĕлхи вĕрентекен Валентина Павловна Ефимова питĕ ырă кăмăллă та илемлĕ çын. Ачасене чăваш чĕлхин пуянлăхĕпе хавхалантарма та ăста. Валентина Павловнăпа пĕрле Эверест тăвне те тепĕр май нимĕн те мар çавăрса хума пулассăнах туйăнать (чĕнтĕр те хуштăр кăна)!

Пытарса тăмалла мар, пурне те пĕлтермелле: шкулта тĕнчери чи лайăх вĕрентекенсем ĕçлеççĕ. Иккĕмĕш тăван килĕн асамĕ пире яланах ăшăтса тăрать. Таврапĕлў музейĕ те тăван кил ăшшиллĕ. Ăна чăваш кил-çурчĕ пек йĕркеленĕ, сăпкари ача та пур унта! Кипкепе чĕркенĕ пысăк пукане пире ăнлансах пăхса выртнăн туйăнать – паллать те пулмалла пире. Музейра хуçалăхра авал усă курнă ĕç хатĕрĕсемпе, савăт-сапапа, тумтирпе паллашма пулать. Пирĕн çĕршыв тата тăван тăрăх историйĕпе çыхăннă экспонатсем те нумай.

Кĕскен паллаштартăмăр хамăрпа. Ĕнентĕр пуль ĕнтĕ пирĕн 5-мĕш класс çут тĕнчери чи туслă та хастар класс пулнине?

Пур ачасен ячĕпе –
**Юлия НИКОЛАЕВА, Динара МУХАМЕДЗЯРОВА, Кристина СМИРНОВА, Валерия МОСКОВКИНА (сăнўкерчĕкре сулахайран сылтăмалла тăраççĕ).**

*Вĕренекенсемпе калаçаканĕ –*
***Владимир СТЕПАНОВ.***



● **"ТĂВАН ЯЛĂМ ÇАПЛА ПУÇЛАННĂ"**

# Куршанкă-Шăхалĕн çутă малашлăхне ĕненетпĕр

Эпĕ Куршанкă-Шăхаль ялĕ çинчен каласа парасшăн. Унта манăн анне çуралса ўснĕ. Вăл пысăк çемьере çитĕннĕ: унăн виçĕ тетĕшĕ тата икĕ аппăшĕ пур. Ултă ача çуратса ўстернĕ кукамайпа кукаçи. Вĕсем мана юратаççĕ, яланах хăйсем патне килессе чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Анчах та Шупашкартан унта çўреме инçерех, 160 çухрăма яхăн. Куршанкă-Шăхаль (Коршанги-Шигали) Тутар Республикинчи Çĕпрел районĕнче вырнаçнă.

Эпĕ пĕчĕкренех ку яла хăнана çўретĕп. Вăл пысăках мар. Анне каланă тăрăх хальхи вăхăтра унта 50 киле яхăн çеç.

Кукамайăн çурчĕ умĕнче юханшыв пур: хĕлле унта эпир çунашкапа ярăнатпăр. Инçех мар, сылтăм енче, ял çумĕпе Кахăрлă (Б. Карла) юхса выртать.

Кукаçи каланă тăрăх çак таврари ялсенчен чи малтан никĕсленни – Кахăрлă-Шăхаль. Халĕ унта мишерсем пурăнаççĕ.

Тĕпчевçĕсем çырнинчен вара çакă паллă: 1554 çулта кунта малтан тăватă çемье куçса килсе тĕпленнĕ. Ял пысăкланса пынă. Хăш-пĕр çемьесем лайăхрах вырăнсем шыраса урăх çĕре куçса кайнă. Комсомольски районне кĕрекен Шурутран та темиçе çемье куçса килсе хальхи Куршанкă-Шăхаль ялĕнче тĕпленнĕ. Вĕсенчен пĕри – Шуркка Тимахви, тепри Большаковсен йăхĕнчен пулнă. Çак йăхсене тăсакансем паян та пурăнаççĕ.

Кукаçипе кукамай ялĕ пĕчĕк пулсан та илемлĕ. Унта йывăçсем нумай, уй-хирсем пысăк. Çыннисем те ырă кăмăллă, пĕр-пĕрне яланах пулăшаççĕ. Эпĕ ун çинчен юрă та пĕлетĕп:

Ах, мĕнле хитре Куршанкă ялĕ,
Куршанкă ялне кам юратмĕ?
Куршанкă çине сывлăм ўкнĕ,
Ĕнтĕ уйрăлма вăхăт çитнĕ.

Эпĕ каласма вĕренсенех мана анне çак юрра вĕрентнĕччĕ.

Ĕлĕкхи пурнăç çинчен каланине итлеме те юрататăп эпĕ. Шкулта Аслă вăрçă çинчен пĕлнĕ хыççăн эпĕ аннерен: «Пирĕн кукаçи вăрçăра пулнă-и?» – тесе ыйтрăм. Пулман иккен. Вăл 1939 çулта çеç çуралнă. Унăн тетĕшĕ вара, Николай Константинович Терентьев, 23 çулта вăрçă хирне тухса каять. Вăрçăри паттăрлăхшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тата медальсемпе наградăланă. Вăрçăпа ĕç ветеранĕ ятне те тивĕçнĕ вăл. «Афганистан вăрçинче, – каласа парать анне. – Унта чылай çамрăк паттăррăн çапăçса пуçĕсене хунă. Вĕсенчен пĕри Куршанкă-Шăхальтен пулнă. Çирĕм çулхи çамрăк, Петр Иванович Маркелов та çав хăрушă вăрçăран таврăнайман. 90-мĕш çулсем иртсен унăн ячĕпе урам уçрĕç.

Çак ялтан тĕнче шайĕнчи спорт мастерĕ те тухнă. Вăл Сильвия Петровна Шемеева (Скворцова). Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчи физкультура факультетне вĕренсе пĕтернĕ. 15 çухрăм чупассипе Раççей чемпионĕ (2001), çурма марафонта Раççей кубокĕшĕн тупăшса пĕрремĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Тĕнче шайĕнчи ăмăртусенче, Европăра, Азире пысăк çитĕнўсем тунă.

Паллă çынсем татах та нумай кукамайпа кукаçи ялĕнче. Пурин çинчен те каласа пĕтереймĕн.

Юлашки çулсенче тăван ялĕ пушанса пыни питĕ кулянтарать аннене. Хĕллехи, кĕрхи вăхăтра кĕрсе тухма йывăр Куршанкăна, çулĕ япăх. Çамрăксем те урăх çĕре куçса каяççĕ.

Апла пулсан та эпир Куршанкă-Шăхале çутă малашлăх кĕтнине чунтан ĕненетпĕр.

***Тайби ТЕРЕНТЬЕВА.***

Шупашкар,
1-мĕш шкул.

## Савăнатăп

Эп аннене пит юрататăп,
Ăна чунтан эп хисеплетĕп.
Вăл тăрăшать пуриншĕн,
Савăнатăп вăл пурришĕн.

*Екатерина ЛЕПЕШКИНА.*

Улатăр районĕ,
Суйкăн шкулĕ.

## Юрататăп

Юрататăп аннене,
Унăн кăмăллă сăнне.
Мĕн тери анне хитре!
Савăк кулă сăн-питре.

Юрататăп аннене,
Унăн тутлă кукăльне,
Çепĕç, ылтăн аллине,
Тем тума та пĕлнине.

Юрататăп аннене,
Хăш чух кăшт ятланине,
Вĕрентсе каланине,
Ăслă шухăшланине.

*Родион АЛЕКСЕЕВ,*
*5 класс.*

Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Хуракасси шкулĕ.

## Пĕрремĕш сăмах

Чăваш пепки çак сăмаха
Пĕрремĕш хут калать.
Анне! Мĕнле ачаш вĕт-ха!
Епле вăл янăрать.

Хĕвел пек эсĕ ман çине
Пăхатăн ăшшăн, юратса.
Аннесен уявĕпе
Саламлатăп ыр сунса.

*Григорий РОМАНОВ,*
*3 класс.*

Çĕмĕрле районĕ,
Хутар шкулĕ.

## Анне

Манăн анне пит ĕçчен,
Питĕ тутлă пĕçерет:
Кукăль пиçсе тухиччен
Яшкине те хатĕрлет.

Урокне пĕрле тăватпăр,
Ўкеретпĕр те сăрлатпăр.
Пулăшатăп эп ăна
Питĕ йывăр вăхăтра.

*Арианна АНДРЕЕВА,*
*5-мĕш класс.*

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.

* * *

Эпĕ тухрăм урама
Çумăр айĕнче чупма.
Эп йĕпентĕм çумăрпа –
Анне вăрçрĕ-ха мана.

* * *

Юрататăп аннене,
Мĕншĕн тесен вăл пĕрре.
Ир-ирех вăл вăранать,
Мана шкула ăсатать.

*Екатерина ПЕТРОВА,*
*5-мĕш класс.*

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.

* * *

Ир-ирех тăрать анне,
Пуçăнать вăл хăй ĕçне.
Лартса ярать яшкине,
Тутлă пултăр тет çиме.

*Евгения ИВАНОВА,*
*5-мĕш класс.*

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.



*© Виктория МАТЬЯНОВА* (Шупашкар районĕ, Ишек шкулĕ) *сăнÿкерчĕкĕ.*

## Юратнă çыннăм

Маншăн питĕ хаклă
Пĕр анне кăна.
Эпир ир те каçăн
Юнашар санпа.

Эсĕ юрататăн
Юмах калама.
Ялан пулăшатăн
Ўкерчĕк тума.

Эс те ăса хывнă
Манпала «Букварь».
Пĕрле уçкаланă
Санпала «Словарь».

Шкулта вĕренетĕп
Яланах аван.
Мана, анне, эсĕ
Вăй паран чунтан.

*Денис ТИХОНОВ,*
*4-мĕш «б» класс.*

Вăрнар районĕ,
Вăрнарти 2-мĕш шкул.

## Каçар

Аннеçĕм, сан валли
Мĕнле сăмах тупам-ши?
Хам сана юратнине
Епле халь пĕлтерем-ши?

Аннеçĕм, сан валли
Мĕнле парне суйлам-ши?
Чи хитре чечеке сан валли
Эп пуçтарма пĕлтĕм-ши?

Эс пире юратни, ыр сунни
Нихăçан чĕререн тухас çук.
Эс пире пулăшни, сыватни
Нихăçан та асран тухас çук.

Аякра чух анне ытларах кирлине
Тин эп туйрăм, ăнлантăм паян.
Сан чĕрÿ çуннине, эс пире кĕтнине
Тепĕр чух асилместпĕр, туян.

Эс пире яланах каçаран,
Йывăр чух чĕререн хуйхăран.
Ăш хыпар яланах эс кĕтен,
Телефон сассине эс тимлен.

Нимĕнле виçепе виçме çук
Санăн чун ăшшине, эп пĕлеп.
Нимĕнле парнепе хаклас çук
Кăмăлна. Каçарсам эс пире.

*Элина ИВАНОВА.*

Елчĕк районĕ,
Кĕçĕн Таяпа ялĕ.

## Манăн хÿтлĕх

Анне пурришĕн савăнатăп,
Ăна пĕтĕм чунтан саватăп.
Унра ялан хÿтлĕх шыратăп,
Ун ăшшипе эп ăшăнатăп.

Вăл чирлесен пит кулянатăп,
Ыр сăмахпа лăплантаратăп,
Ялан сунатăп сывлăхне.
Эп юрататăп аннене!

*Андрей САМУТКИН,*
*6-мĕш класс.*

Самар облаçĕ,
Шунтал районĕ,
Палантай шкулĕ.

## Кĕтет вăл ыррине ялан

Кашни калать чунтан: «Анне», –
Хăйне кун панă çыннине.
Анне алли лăпкать пуçран,
Ыр çын пулма сунать ялан.

Вăл сĕртĕнсен эп ир-ирех
Куçа уçатăп кăмăлтан.
Телей пиллет анне пире,
Кĕтет вăл ыррине ялан.

*Инна КОЗЛОВА.*

Елчĕк районĕ,
Кĕçĕн Таяпа шкулĕ.

## Кукăль

Ирех тăтăм та паян,
Хĕвел çутатать аван!
Анне кукăль пĕçерет:
«Апат çиме лар-ха», – тет.
Çитрĕ пирĕн кукамай:
– Кукăльне кăлар, ай-ай!
Тутлă шăрши урамра,
Чĕнсе килчĕ кунталла.
Сиксе кĕчĕ шăллăм ман:
– Кукăльне пĕçернĕ кам? –
Ыйтрĕ манран савăнса,
Сĕтел хушшине ларса.
Атте апата килет,
Вăл та темшĕн тĕлĕнет:
– Мĕн шăрши кунта кĕрет?
Хăвăртрах çиес килет.
Кĕрсе тăчĕ ак кукка,
Чечексем ун алăра:
– Кукăль мана çитерсен
Эп парнелĕп чечексем.
Кукăль чăн та пит аван!
Çитсе ларнă пур тăван.
Тăван аннене мухтать,
Анне чĕри савăнать.
Пурте пĕрле çемьепе
Лартăмăр кукăль çиме!
Чăннипех те тутлă пулчĕ,
Ун тĕпренчĕкĕ çеç юлчĕ.
Нимĕн те сая ямарăм,
Тĕпренчĕкне хăвармарăм,
Сырăша йăлтах тултартăм,
Кайăксене тăрантартăм.
Вĕçсе килчĕç кайăксем,
Тулчĕç-ха хырăмĕсем.
Хитре юрă шăрантарчĕç,
Тав сăмахĕ те каларĕç.

*Татьяна ЕФРЕМОВА.*

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Штанаш шкулĕ.

## Санпала эпĕ пуян!

Ман анне – кăмăл хуçи,
Кашни çыншăн чун уççи.
Сăмахпала йăпатать,
Ыр сĕнÿ-канаш парать.

Вĕренÿ тытăмĕнче,
Ялти халăх умĕнче
Хастар ĕçпе палăрать,
Пархатарлă ĕç тăвать.

Анне – шут ĕç тăвакан,
Çын кăмăлне туптакан.
Ĕç сана кĕтет ялан,
Чир-чĕр мĕнне эсĕ ман.

Çирĕп сывлăх пултăр, кăмăл!
Пул çĕнтерейми çил-тăвăл.
Юратап сана чунтан –
Санпала эпĕ пуян!

*Данил ЩИПЦОВ,*
*7-мĕш класс.*

Елчĕк районĕ,
Таяпа Энтри шкулĕ.

## Ĕмĕтри ĕмĕт

Эп Волков вĕреннĕ шкулта вĕренетĕп,
Чунтан эп хавас çавăнпа.
Вăл утнă сукмаксемпе халĕ çÿретĕп,
Тата мухтанатăп унпа.

Мĕн-ма-ши? Калатăп хăюллăн:
Ентешĕм маттур пулнăран.
Мĕн-ма-ши? Калатăп патваррăн:
Ăна пурте пуç тайнăран.

Вулатăп савса ун юмахĕсене эп,
Кашни ун паха калавне пит тăнлать.
Чăваш халăхне вăл ырланă. Пĕлетĕп!
Тăван чĕлхере ун сасси янăрать.

Ентешĕм пекех ман пуласчĕ ÿссессĕн,
Тăвасчĕ ун евĕр хастар утăмсем.
Паян нумайрах вĕренсен-ĕçлесессĕн,
Ыран пурнăçа кĕрĕç ман ĕмĕтсем.

*Юлия АДЮКОВА,*
*8 класс.*

Елчĕк районĕ,
Аслă Елчĕк шкулĕ.




# Чăваш Енре Пĕтĕм Раççейри Самбо кунĕ иртрĕ



Чăваш Республики те Пĕтĕм Раççейри самбо кунне ирттермелли тĕп вырăн пулса тăчĕ. Пирĕн çĕр-шывра самбо спорт тĕсĕ 76 çул тултарнине анлăн уявларĕç.

Шупашкарти Самбо керменĕнче иртнĕ савăнăçлă мероприятие Раççей Спорт министерствин представителĕ Георгий Кабанов, Пĕтĕм Раççейри тата Европăри самбо федерацийĕсен президенчĕ Сергей Елисеев, Самбо-70 спортпа вĕренӳ центрĕн директорĕ тата Мускав патшалăх Думин депутачĕ Ренат Лайшев, Пĕтĕм Раççейри Самбо федерацийĕн вице-президенчĕ, ЧР Самбо федерацийĕн президенчĕ Евгений Селиванов, ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников тата Шупашкар пуçлăхĕ Леонид Черкесов хутшăнчĕç.

Пирĕн республикăра спортăн çак тĕсĕ çулран-çул вăй илсех пырать. Çакна, спорт ведомствин пуçлăхĕ Сергей Мельников каланă тăрăх, чăваш спортсменĕсем тĕнче шайĕнче çĕнтерни те çирĕплетет. «Паллах, кунта тренерсен тата федерацире шкул ертӳçисен, уйрăмах Е.В.Селивановăн, тӳпи пысăк. Шăпах Евгений Васильевич республикăра самбо тĕсне аталантарас енĕпе пысăк ĕç турĕ», – терĕ вăл.

Самбо кунне халалланă пресс-конференцире Чăваш Енре спортăн çак тĕсне вăйлăрах аталантарас тата вĕренӳ заведенийĕсенче ятарлă спорт класĕ уçас ыйтăва хускатнă.

Чăвашра самбо шкулне çӳрекенсен шучĕ пин çурăран та иртет. Кунта вĕренекенсем пĕтĕм тĕнчери ăмăртусенче çĕнтереççĕ. Сăмахран, Эдера Лаврентьева тата Вера Лоткова Сеулта тĕнче шайĕнчи ăмăртура çĕнтерни мĕнле паха! Наталья Степанова вара кĕмĕл призер пулса тăнă. Пĕтĕм Раççейри самбо кунĕнче çак спортсменсемпе вĕсен тренерĕсене – Сергей Пегасова тата Дмитрий Осипова – Чăваш Енри Самбо федерацийĕн хаклă парнисемпе чысларĕç.

Савăнăçлă мероприяти хыççăн 16-17 çулти яшсем Раççейри самбо турнирĕн финал тупăшăвне тухрĕç. ЧР Пуçлăхĕн Кубокĕшĕн пилĕк йывăрăш категорине кура кĕрешрĕç. Чăваш самбо шкулĕн вĕренекенĕсем вунă медаль çĕнсе илчĕç: икĕ ылтăн, икĕ кĕмĕл, ултă бронза. Республика Пуçлăхĕн Кубокне те чăваш самбисчĕсемех тивĕçрĕç.

# Ача-пăча хоккейне аталантарасшăн

Чăваш Енри Вĕренӳ министерствин ЮНИТЭКС центрĕнче республикăри преподаватель-тренерсем, спорт инструкторĕсем, физкультура вĕрентекенĕсем канашлу йĕркелерĕç. Вĕсем «Ылтăн шайба» клубăн çамрăк хоккеисчĕсене ЧР Пуçлăхĕн Кубокне çĕнсе илессишĕн шкул ачисен XVII Спартакиадине хатĕрлес ыйтăва сӳтсе яврĕç. Канашлăва Патăрьел, Вăрнар, Йĕпреç, Комсомольски, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Пăрачкав, Шăмăршă, Етĕрне, Елчĕк районĕсенчен тата Канаш, Çĕнĕ Шупашкар, Шупашкар хулисенчен килнĕ яваплă çынсем хутшăнчĕç.

«Ылтăн шайба» клубăн çамрăк хоккеисчĕсем 2013-2014 çулсенче хутшăннă республика ăмăртăвĕсене пĕтĕмлетрĕç. Çитес тапхăрти хоккей ăмăртăвĕсене те палăртса хучĕç.

# Пичче пек пуласчĕ

Муркаш районĕнчи Шетмĕпуç шкулĕнче çиччĕмĕш класра вĕренекен Лена Сергеевăшăн сывлăхлă пуласси малти вырăнта. Ку тĕлĕшпе вара ăна спортпа туслашни самай пулăшать. Çакна хĕрача аван ăнланать, çавăнпа физкультура урокне пĕрре те сиктермест. Волейболла питĕ ăста вылять вăл, теннис енĕпе те маттур. Çĕр питне шурă юр хупласанах йĕлтĕр сырать те ярăнма тухать. Тăрăшни, хатĕрленни куçкĕретех çав. Ахальтен мар Лена спорт ăмăртăвĕсенче час-часах çĕнтерет. Шкулта уяв ирттернĕ чухне вара сцена çине тухса илемлĕ ташă парнелеме те хатĕр.

– Манăн иккĕмĕш сыпăкри пичче пек пулас килет. Славик хытă чупать, тăтăшах «Зарницăна» хутшăнать. Тем тума та пĕлет вăл. Машина та, трактор та, комбайн та çӳретеет. Эх, унран вĕренесчĕ... – шухăшне уçать хĕрача. Сăмах май, пиччĕшне кура вăл трактор хускатма хăнăхнă-ха.

Пурнăçне спортпа е çар ĕçĕпе çыхăнтарма ĕмĕтленет Лена. Хальлĕхе вара вăл кĕлеткине писĕхтерет, çитес ăмăртăва хутшăнма хатĕрленет.



# Унран тĕслĕх илмелли пурах



Илья КЛОЧКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хĕрлĕ Чутай шкулĕнче вĕренекенсене тĕрлĕ енлĕн аталанма йывăр мар, мĕншĕн тесен кунта условисем питĕ аван. Спортпа туслашма вара кашниех ăнтăлать. Ачасем физкультура урокĕнче эрнере пĕр хутчен «Хастар» физкультурăпа спорт комплексне çӳреççĕ, тĕрĕс ишме хăнăхаççĕ.

Кашни арçын ача çĕршыв сыхлавçи пулма ĕмĕтленет-çке. Çавăнпа кунта вĕсене вăтам класран пуçласа салтак пурнăçне хатĕрлеççĕ.

Маттур ачасем тăтăшах тĕрлĕрен ăмăртура палăраççĕ. Республикăра та, Раççей шайĕнче те хăйсене кăтартма пултарчĕç ăкă. Эдуард Васильевич Романов тренер хатĕрленипе вĕсем «Çар çулне çитмен яшсем» спартакиадăра пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ çĕнтерӳçĕсен йышне лекрĕç. Кăçал Рязаньте республика чысне хӳтĕлеме тивĕçнĕ. Çавăн пекех Анапăри «Президент тупăшăвĕсенчен» призер пулса таврăннă. Туслă ушкăн вуннăмĕш класри Артем Романова командир пулма шаннă. Хăйĕн пысăк яваплăхне ăнланать арçын ача, çавăнпа нихăçан та тимлĕхне çухатмасть. «Ку таранччен йывăр самантсем сиксе тухманччĕ-ха, малашне те ăнăçса пытăрччĕ», – тет вăл.

Вунпĕрмĕш класра вĕренекен Денис Триковский хăйĕн пуласлăхне çар ĕçĕпе çыхăнтарасшăн. Çак хастар ачасем кĕçех шкултан вĕренсе тухса пурнăçăн аслă çулĕ çине тухăр. Вĕсем хыççăн юлакансен вара камран тĕслĕх илмелли пурах.

Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

# Ырă уру ырă уттăр, ырă аллу ырă ĕç тутăр

Марук аппа патне кĕрсен шанк! хытрăм. Ара, унăн пӳртĕнче икĕ-виçĕ хĕрарăм сăмах çăмхине хаваспах сӳтеççĕ-çке. Мана асăрхамарĕç те. Айăплăн пăхкаласа кăмака çумĕнчи сак çине вырнаçрăм. Ларатăп çапла юрпа йĕпеннĕ алсана йăваласа. Акă сарă çӳçлĕ хĕрарăм кăвак тутăр çыхнăскере:

– Ăçта каян, Пикенпи?
– Çарăк касма каятăп.
– Çарăкна кама паратăн?
– Ик инкене паратăп.
– Инкӳ сана мĕн парать?
– Ик хултăрмач тĕр парать.

Ах! Çак хĕл кунĕнче вара камсен пахчинче çаплипех çарăк ларать-ши? Кахал çынсен пулсан анчах. Ура çине ялт! сиксе тăтăм та Марук аппа патне пырса хăлхинчен пăшăлтатрăм.

– Чим-ха, эсĕ те вĕсемпе пĕрле çарăк кăларма каятăн-и? Çак çанталăкра-и? Урамра ытла сивĕ-çке. Акă эпир ачасемпе урамра вылятпăр. Шăнса кайнипе сан пата чей ĕçме кĕрсе тухас терĕм. Тархасшăн, тусусемпе ан кай шăннă çĕре чакалама. Чирлесе ӳкĕн, – асăрхаттартăм шăппăн çеç, лешсем илтмелле мар.

Марук аппа сасартăках хырăмне тытса ахăлтатма тапратрĕ. Нимле мар пулса кайрăм. Ара, мĕн пулчĕ-ши хайхискере тесе хăраса ӳкрĕм.

– Ай, Лисук, ан култар-ха эсĕ мана! Эпир кунта репетици ирттеретпĕр. Ыран клубра уяв пулать, спектакль сыпăкĕсене кăтартатпăр. Хамăр пултарулăхпа халăха паллаштарас тетпĕр. Эсĕ те пыр унта. Хапăлласа кĕтетпĕр, – терĕ кусĕсене аллисемпе шăлкаланă май.

Эй, Турă! Кун пек пăтăрмаха лекессе пĕлнĕ пулсан-и?

Çĕр тĕпне анса каяттăм! Вăтаннипе хам мĕншĕн килнине мансах урамалла тухса сирпĕнтĕм.



Кай, кай, кай касси,
Кай сикрĕмĕр тухрăмăр.
Ĕнесем патне кайрăмăр,
Симĕс курăк куртăмăр,
Çампа каçа юлтăмăр.



Ну, кам пурри ан шавлăр,
Хитре кĕркунне çывăртăр...



Ырă пуçу ырра тĕллетĕр,
Ырă уру ырă уттăр,
Ырă аллу ырă ĕç тутăр!

*Элиза ВАЛАНС хатĕрленĕ.*

**ПАЛЛĂ ÇЫН ПУРНĂÇĔНЧЕН**

# Мария ВОЛКОВА: «ЙЫВĂР ÇĔРТЕ ТАТА ХЫТĂРАХ ТĂРĂШАТТĂМ»

**Мария Волкова – чăваш поэзийĕнче чи паллă ятсенчен пĕри. Ноябрĕн 7-мĕшĕнче вăл çуралнăранпа 80 çул çитрĕ.**

***Ыр ят илтме çăмăл мар. Мĕнлерех çынсем çуратса ӳстернĕ-ши ăна?***

**Ашшĕ**

Ашшĕ милици начальникĕнче, прокурор пулăшаканĕнче вăй хунă. Нимĕнле ĕçе те тиркемен. Кăшт пушансанах алла купăс тытнă. Кĕвĕ-çемĕ каланă. Ытларах авалхисене килĕштернĕ. Маруç пĕр хускалми киленсе итленĕ.

Ашшĕ пĕррехинче хуткупăс турĕ те «Светит месяц» юрă каларĕ. «Пĕртте йывăр мар, аппаланса пăх-ха», – хавхалантарчĕ кĕçĕн хĕрне. Ай, чăнах та, мая килчĕ мар-и.

– Эсĕ кĕвве аван чухлатăн, музыканта вĕрен, кăмăла çĕклентерчĕ ашшĕн сăмахĕ.

Пĕр иленчĕ те найлаттарать те найлаттарать. Йăлăхтармасть-те-шим, ашшĕ пĕр нимĕн те шарламасть. Пусĕпех ĕçе путса хăма савалать-и, вĕрен яватъ-и, хĕрĕ йăнăшсан, тӳрех тӳрлетет.

Типтерлĕскер ачи-пăчипе тек-текех аппаланать. Шӳтлет, кулать. Ĕçсĕр сулланса çӳретермест.

Пĕрре хăйĕн аттине пăсса Маруçа атă çĕлесе тăхăнтартрĕ. Эх, мĕн тери савăнăç! Çавăнтах урама чупса тухрĕ хĕрĕ, каллĕ-маллĕ утkаларĕ. Тинех те меллĕ-çке!

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине тухса кайнă чухне Андрей Андреевич хĕрне йăтса çӳле çĕклерĕ те таврăнсан сĕрме купăс ăсталаса парнелеме шантарчĕ. Таврăнаймарĕ ашшĕ. Музыканта вĕренес ĕмĕте вăрçă татрĕ.

**Амăшĕ**

Амăшĕ, Федора Яковлевна, хут пĕлмест, анчах анлă тавракурăмлă. «Тавралла пăхни, кайăк юрланине илтни пысăк хуйха та пусарать. Çил вĕрни те хавас кӳрет», – шухăшлать вăл.

Амăшне питĕ хĕрхенет: пилĕк ачапа тăлăха юлчĕ. Пулăшать ăна. Амăшĕн чун йăпатмăшĕ – юрă. Ырми-канми ĕçленĕ хушăра юрлать. Илемлĕ те уçă сасси ян та ян каять.

**Хĕрĕ**

Вуниккĕре аçа çапнă йăмра çинчен сăвă çырчĕ. Учительте ĕçлекен тăванне кăтартрĕ. Тиркесен, ăнланчĕ – пĕлӳлĕх çитмест. «Йывăр çĕрте тата хытăрах тăрăшаттăм», – чунне уçать автобиографийĕнче.

Тытăнчĕ кĕнеке вулама. Шкул библиотекинче вăл вуламан пĕр кĕнеке юлмарĕ. Халĕ ĕнтĕ хыçа кутамкка çакса вунпилĕк çухрăмри район библиотекине танккать. Çил-тăмана та пăхмасть, йĕлтĕрпе çӳрет.

Пахча хыçĕнчи кӳлĕ хĕвел çинче çуталса выртать. Унта çăл тапать, çавăнпа шывĕ хухмасть. Кӳлĕ çинчен сăвă хывре. Вăл республика хаçачĕнче 1952 çулхи июль уйăхĕнче çапăнса тухрĕ. Ку сăвăпа тӳрех юрă кĕвĕлерĕç.

Ĕç çĕклет тенине хăй курса ĕненчĕ. Сăвă ăста çырса чапа тухрĕ. Тăрăшни сая каймарĕ. Çакна Юрий Кудаков композитор сăмахĕ те аван çирĕплетет: «Оперăпа балет театрĕнче «Çĕмĕрт шап-шурă çеçкере» музыкăлла камитĕм темиçе сезон та пычĕ. Унта Мария Волкован «Астăватăп» сăввипе хывнă юрă та янăрать».



Мария Андреевна Волкова 1979 çулхи октябрь уйăхĕн 31-мĕшĕнче Шупашкарта вилнĕ. Ăна Вăрмар районĕнчи Карăкçырми ялĕнче пытарнă.

*Галина ЕЛИВАНОВА,*
*К.В. Иванов ячĕллĕ Литература музейĕн наука аслă сотрудникĕ.*

**Сăнӳкерчĕкре**: Мария Волкова сăвăç.

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## «Кĕвĕ» салат

**Салат валли 200 грамм ĕне ашĕ, 1 пуç сухан, 2 çăмарта, 100 грамм сыр, 1 апат кашăкĕ 9 процентлă уксус, майонез, кăштах тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Пĕçерсе сивĕтнĕ какая аш арманĕпе авăртмалла. Сухана çурма çаврашкан турамалла та уксус хушнă 1 стакан шыва ярса хумалла. 10 минут тытмалла. Унтан сăрăхтармалла. Сырпа çăмартана теркăламалла. Çимĕçсене сийпе çак йĕркепе хумалла: какай, сухан, çăмарта, сыр. Пур сие те майонез сĕрмелле.

## Килте хатĕрленĕ шăккалат çăвĕ

**Çимĕçе янтăлама 200 грамм услам çу, 4 апат кашăкĕ какао порошокĕ, 3 кашăк сахăр çăнăхĕ, 1 хутаç ванилин илĕр.**

Услам çăва сивĕтмĕшрен кăларса çемçеличчен тытăр. Сахăр çăнăхне какао порошокĕпе, ванилинпа хутăштарăр. Çак хутăша пĕчĕккĕн çемçе çу хушса лăкăр. Унтан силикон формăна хурăр та пленкăпа е фольгапа чĕркĕр. 20 минутлăха морозильнике лартăр. Вăхăт иртсен кăларăр та сивĕтмĕше хурăр. Çăва пĕр эрнерен ытла упрама юрамасть.

## Ансат кукăль

**Кукăль валли 4 çăмарта, 250-300 грамм майонез, пĕр чей кашăкĕ çурă чустана кăпăшкалатмалли порошок (разрыхлитель), çăнăх, ветчина тата сыр кирлĕ пулать.**

Çăмартана, майонеза, чустана кăпăшкалатмалли хатĕре çăнăхпа хутăштармалла. Чуста çăра хăйма евĕр пулмалла. Ветчинана вакламалла, сыра теркăламалла. Чустан çур пайне формăна ямалла, ун çине вĕтетнĕ çимĕçсене тикĕссĕн хумалла. Хыççăн юлнă чустапа хупламалла. Çиеле сыр сапма та юрать. Кукăле 180 градус таран хĕртнĕ духовкăна лартса çур сехет пĕçермелле.

## Кăлпассипе, пылак пăрăçпа пĕçернĕ пăрçа яшки

**Çак тутлă яшкана хатĕрлеме 300 грамм тĕтĕмленĕ кăлпасси, 1 стакан пăрçа, 1 кишĕр, 1 пуç сухан, 2 çĕрулми, тип çу, укроппа петрушка, тăвар, пăрăç, лавр çулçи илĕр.**

Шыва янă пăрçа савăтне вăйсăр çулăм çине лартăр. Пухăнакан кăпăка илсе пăрахăр.

Пахча çимĕçсене çуса хуппинчен тасатăр. Кишĕрпе сухана вĕтĕ тăваткалсем туса, пылак пăрăçа улăм пĕрчи евĕр, çĕрулмине тăваткалласа турăр. Кишĕрпе сухана тип çу янă çатмара çемçеличчен ăшалăр. 10 минутран çатмана пăрăç хушăр та тата çаван чухлех ăшалăр.

Пăрçа пиçсен шӳрпене çĕрулми ярăр. 15 минут иртсен çатмари хутăшпа улăм пĕрчи евĕр каснă кăлпасси хушăр та тепĕр 10 минут пĕçерĕр. Унтан тăвар, вĕтетнĕ ешĕл çимĕçсене, лавр çулçи, кăштах пăрăç хушăр. 5-7 минутран çулăма сӳнтерме юрать.

## Сĕнӳсем

**Кил-çуртри ĕçсене пурнăçланă чухне çак ансат сĕнӳсене шута илме сĕнетпĕр.**

◈Çĕрулми пиçекен савăта кăштах лимон сĕткенне хушсан вăл тутлăрах пулĕ.

◈Салата сухан ямалла-и? Апла ăна вĕтĕ турăр та дуршлага хурса вĕренĕ шывпа чӳхĕр. Ун чухне йӳçĕ тутă пĕтет.

◈Пулă пĕçернĕ чухне савăта кăштах сĕт ярсан унăн шăрши сĕвĕрĕлет.

◈Фарфор савăт-сапа тĕксĕмленчĕ пулсан ăна кăшт нашатырь спирчĕ хушнă лĕп шывпа çăвăр.

◈Пиçнĕ пахча çимĕçе тӳрех сивĕ шывпа чӳхесен хуппи лайăх тасалать.

◈Хытă пĕçернĕ çăмартана сивĕ шывра йĕпетнĕ çĕçĕпе ваклăр. Ун чухне çăмарта сарри тĕпренмĕ.

◈Чăх какайĕнчен хатĕрленĕ шӳрпене лавр çулçи ямалла мар. Вăл какай шăршине улăштарать.

◈Кукăль-çăмах валли хатĕрленĕ чустана уйăрнă чухне алăсене тип çупа сĕрĕр.

◈Салат хатĕрленĕ чухне малтан тăвар хушса пăтратăр, хыççăн çес – тип çу.

ХАМĂР ХУШĂРА

## Мĕне пĕлтерет-ши тĕлĕк?



Хаçатăн иртнĕ номерĕсенче тĕлĕксен пĕлтерĕшне пичетленĕччĕ. Вулакансем ыйтнипе çак темăна малалла тăсатпăр.

Тĕлĕкре камăн та пулин **çуралнă кунне уявланине** курни – çывăх вăхăтра эсир халĕччен лайăххах пĕлмен пĕлĕшĕрпе туслашасса.

**Институт аудиторийĕ, лекци вулани, тĕрлĕ приборлă лабораторисем** тĕлленни çĕнĕ пĕлӳ илме хистет. Май пулсанах кĕнеке вулăр, тĕрлĕ темăпа докладсемпе рефератсем хатĕрлĕр.

**Сивĕ кĕсел ĕçни** сывлăх хавшас хăрушлăх пуррине асăрхаттарать. **Вĕри** – хăвăра килĕшекен каччăпа (хĕрпе) тĕл пуласса.

Тĕлĕкре **конкурса хутшăнтăр-и?** Апла сирĕн шăпа камăн аллинче, çавă йăлтах пĕтĕмлетсе парĕ. Ыйтусене хуравлĕ. Конкурсра çĕнтерни – çав çын суйлавĕ сире ăнăçу парнелессе. Çĕнтерейменнине вара тепĕр майлă ăнланмалла. Эсир куракансен хушшинче çеç ларни – часах çемьере, коллективра, ушкăнра улшăнусем пуласса.

**Пуля** курни – юратнă çын кăмăла пăсакан хыпар пĕлтерессе.

**Чечексем çинче сĕткен пуçтаракан пыл хурчĕ** пуçарнă ĕçсем ăнăçлă вĕçленнине пĕлтерет. Юратура та ăнăçу кĕтет.

● ĂСТА АЛĂСЕМ

# Гирляндăна капăрлатар-и?














Çĕнĕ çул уявĕ çывхарса килет. Парнесем туянмалла, чăрăш валли теттесем суйламалла... Вăхăт нумай та юлмарĕ-çке! Кашнийĕн килĕнчех гирляндăсем пурах. Вĕсен çути уява асамлăх сĕмĕ кĕртет, тавралăх хаваслăхпа тулать. Йăлтăр-ялтăр çутăллăскерне хутран ăсталанă хунарсемпе капăрлатсан вара пӳлĕм тата илемлĕрех курăнĕ. Апла, пĕр тăхтамасăр ĕçе пуçăнар-ха.

Пире тĕрлĕ тĕслĕ хут, линейка, кăранташ, йĕппе çип, çилĕм кирлĕ пулать. Хут çине кăранташпа тата линейкăпа усă курса йĕрсем туртса тухăр. Вĕсен хушши пĕр пек пулмалла.Варрипе хут купăс евĕр йĕрсем туртмалла (1-мĕш ӳкерчĕке пăхăр). Хута çак йĕрсемпе хуçлатăр. Ĕçе çăмăллатмашкăн йĕрсене йĕп вĕçĕпе чĕрсе тухма юрать. Уйрăмах чалăш йĕрсене тимлĕх уйăрăр. Вĕсене лайăхрах хуçлатăр.

Акă пирĕн хут листи купăс евĕр пулчĕ. Унăн хĕррипе йĕппе çиппе çĕлесе тухăр та (9-мĕш ӳкерчĕке пăхăр) çиппе турттарса вĕçĕсене çыхăр. Унтан çилĕмпе çыпăçтарăр.

Гирляндăна капăрлатмалли хăйне евĕр хунар хатĕр те. Халĕ ăна гирлянда лампочки çине тăхăнтартмалли çеç юлать.

*Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.*

Тантăш
49 №, 2014, декабрь, 4


**(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 48-мĕш номерте).**

Çул çинче ăна Иливан хăваласа çитрĕ.

– Эсĕ илтнĕ-и, Урасмет хăй авланать тет? – тытса чарчĕ вăл качча.

– Ан тĕлĕнтер, Иливан! – вĕçĕнче (юри вĕсене сыхлама тухнă тейĕн) Карамышпа Урасмет тăраççĕ.

– Ак пирĕн Хусан каччисем тавраннă! – терĕ алманчă çула пўлсе. – Эп ак сиртен маларах çитрĕм, пĕр князь хăйĕн кимми çине лартса илсе хăпарчĕ.

– Ман хам йăмăк туйне кĕме ўкерчĕ Карамыш.

– Ку вăл, мăрса, курай мар, шăпăр, ăнлантăн-и, шăпăр! – çиллене кăшкăрчĕ ăна кил хуçи.

– Пурпĕрех мар-и? Шăпăр тăк – шăпăр. Пуçлăр часрах ăмăртса калама! Хăшĕ çĕнтерет, çавна вунă алтын укçа

# Туй

Куçма ТУРХАН



ку кĕтмен хыпара илтсен ним калама аптрарĕ Ахтупай. – Патирекĕ валли илет терĕç-çке?

– Пирĕн килте никам та çук. Çавăнпа эпĕ юриех кўршĕсенчен ыйтрăм. Вĕсем çапла каларĕç.

– Ак тамаша! Урасмечĕ валли апла?

– Çавăн пек пулса тухать. Пуян упăшка тупнă сан савнийў!

– Темскер, ĕненес килмест, Иливан.

– Хамăн та ĕненес килмест. Анчах кўршĕсем суяс çук, вĕсем пĕлеççех ĕнтĕ!

– Ав мĕнле иккен. Эрнепи мăрса арăмĕ пулать. Мĕн каласси пур – хитре!

Иливан тĕттĕмре чышкă çеç кăтартрĕ.

– Ак çитсен парап-ха эпĕ ăна мăрса арăмĕ! Ама çури аннене те лайăх тăн кĕртеп. Никам та мар, çавă тунă кăна йăлтах!

Иливанпа Ахтупай малтан Эрнепие хăйне курас тесе хăй хĕр туйне кĕме хăтланса пăхрĕç. Вĕсене унта кĕртмерĕç. Хĕрарăмсем вĕсене асăрхасассăнах кĕлет алăкне хупса лартрĕç те шалтан тĕкĕ хучĕç, вара ним ăнланмалла мар çари! те çари! çухăрса юрра ячĕç. Каччăсен ирĕксĕрех кунтан пăрăнмалла пулчĕ.

Арçын туйне çакланасси те çăмăлах пулмарĕ. Пусма юрать-и, Урасмет? – малалла иртме тăчĕ Иливан.

– Чимĕр-ха, – терĕ Урасмет. – Эсир иксĕр те туя пăсма килетĕр-и е ырă кăмăлпа кĕрсе тухас тетĕр? Асăрхаттаратăп, ун пек-кун пек пулсан ман çынсем хатĕр тăраççĕ. Ак Карамыш мăрса та...

– Вара йăмăк туйне кĕвĕ калама та кĕртмĕн-и? – шăпăрне хĕврен кăларчĕ Иливан. – Ахтупайăн та шăпăр пур. Эпир иккĕн ăмăртмалла каласа сан туйна илем кўресшĕн...

– Илем кўресшĕн! – кулчĕ Урасмет. – Апла кĕрĕр эппин, ывăннă çинчен кăшт савăнăр. Эсир пит ăста шăпăрçă пулаканччĕ.

– Паян та ята ямăпăр. Урасмет туйĕнче начар калама юрать-и вара? – хăй пĕтĕм чунтан эрленнине кулăпа пытарма тăчĕ Иливан.

Шалта вĕсем килсе кĕнине пурте асăрхарĕç. «Иливанпа Ахтупай тавраннă, курăр-ха, Иливанпа Ахтупай тавраннă, курăр-ха, Иливанпа Ахтупай тавраннă», – пăшăлтатрĕç хăлхаран хăлхана.

Урасмет вĕсене хăй аллипе икĕ алтăр кăпăклă сăра тыттарчĕ, унтан пĕрер черкке эрех ĕçтерчĕ.

– Эхэ, курайçăсем! Эппин, çĕмĕрттерме тытăнăр-ха, иптешсем! – Ахтупай аллинчи пушă куркана çĕре çапса паратăп. Ак кураттăр-и, халь тесен халь пама пултаратăп! – Карамыш мăрса пурне те ылтăн укçа кăларса кăтартрĕ.

– Ун пекех нумай памасан та юрать, вĕсене пĕр алтын та çитет, мăрса, – тет Урасмет.

– Çук, Уразмат абзы, вунă алтын паратăп. Карамыш камне пĕлчĕр. А ну, пуçла!

– Мĕнле, тупăшатпăр-и? – шăппăн çеç ыйтрĕ Иливан хăй юлташĕнчен.

– Хăтланса пăхма юрать, – терĕ Ахтупай. – Анчах вăл укçине парать тетне?

– Апла пулсан тăхтар, – хăюлланса мала тухрĕ Иливан. – Карамыш мăрса, укçуна эсĕ мăн кĕрĕве парса хур. Ун пек шанчăклăрах пулать!

– Кам кунта мăн кирў, мин вăл мăн кирў? – терĕ Карамыш.

– Туй пуçĕ! Мăн кĕрў вăл туй пуçĕ пулать! – ăнлантарчĕç ăна темиçен.

Наччасах мăн кĕрĕвĕ – пилĕкрен темиçе тутăр явса çыхнă Теней старике тупса килчĕç. Вунă алтын укçа ун кĕсйине кусрĕ.

– Ан кĕттерĕр ĕнтĕ! Пуçлăр! – кăшкăрчĕç туй курма килнĕ çамрăксем хăйсен тўсĕмлĕхне çухатса.

Ахтупайпа Иливан шăпăрĕсене майлаштарса тытса пĕр-пĕрне хирĕç вырнаçса тăчĕç, Ахтупай – туй курма килнĕ çамрăксем енче, Иливан – сĕтелпе юнашар.

Юрă-ташă чарăнчĕ. Мĕн пулассине кĕтсе пурте шăпăрçăсем çине тинкерсе пăхрĕç.

Ахтупай юлташне куç хĕссе систерчĕ, вара икĕ шăпăрçи те кăкăр тулли сывлăш çавăрса илсе темле ташă кĕвви каласа пуçларĕç. Шăпăрсем пĕрпĕринпе хирĕçмесĕр, пĕр-пĕрне нимĕн чухлĕ те пўлмесĕр такама хĕвеллĕ те ăшă кун уява тухма, пурнăç йывăрлăхĕсене вăхăтлăха манса кайса халăхпа пĕрле савăнма йыхăрчĕç. Чуна çĕклентерсе яракан илемлĕ кĕвĕ çак сывлама çук пăчă пўрте пĕр кас вăштăр çил вĕртсе кĕнĕ пек, ку хăтлă çил вара тарланă пит-куçа çеç мар, çынсен чунĕсене те усăлтарса, кăмăла çемçетсе хăварнă пек туйăнчĕ. Ахтупая хăйне ку кĕвĕ ирхине ирех уçланкăна тухнă кĕтў ачи пĕтĕм чунтан савăнса шăхлич каланине аса илтерчĕ. Савăнать çамрăк кĕтўçĕ, таврари вăрман илемĕпе, ирхи ырă çанталăкпа киленет, вăрманти мĕн пур кайăксене хăйĕнпе тупăшса, çунат çапса юрра яма чĕнет. Хальлĕхе унăн нимле хуйхă-суйхă та çук-ха. Тин хăваласа тухнă сурăхсем уçланкăри ешĕл курăка çăвар тулли çиеççĕ, вĕсене халь нимле хурал та кирлĕ мар. Кĕтўçĕ ку хушăра канма, шăхлич каласа йăпанма пултарать. Çавăнпа кĕтўç хăйĕн пĕчĕк савăнăçне пĕтĕм вăрмана, пĕтĕм тĕнчене пĕлтересшĕн.

Çĕрĕпе каннă хыççăн ытла та лайăх ăна вăрманта, тин çеç шыва кĕрсе тухнă чухнехи пек усă, канлĕ, пуçра та ырă аса илўсем, ырă ĕмĕтсем кăна. Çамрăк кĕтўçĕ хăйĕн чун савнийĕ çинчен шухăшлать. Çак вăхăтра вăл шăхлич шăрантарса никампа та мар, унпа калаçать. Тухрăн-ши эсĕ, савни, ĕнер вăййа е тухмарăн-ши? Аса илтĕн-ши мана е аса илмерĕн-ши? Аса илнĕ, паллах, аса илнĕ, мĕнле пултăр-ха урăхла? Анчах эп тухаймарăм-çке сан патна, эпĕ кунĕпе çўресе ывăннă хыççăн тўрех кĕрсе çывăртăм-çке...

Иливан тăраннăн сывларĕ те пĕтĕм кĕлеткипе хумханса илсе çĕнĕ кĕвĕ пуçларĕ. Ун хыççăн Ахтупай та çийĕнчех çав кĕввĕн йĕрĕ çине ўкрĕ. Курчĕ вăл: юлташĕн пит çăмартийĕсем шăпăр хăмпи пекех чăп-чăмăр пулса кайнă, çамки тарланă, пўрнисем çеç шăпăр чĕлĕхсем çинче пасăрхинчен те хăвăртрах вылянаççĕ.

Мĕн вăхăт калаççĕ вĕсем? Хăçан пĕтет ку чуна илекен ăмăрту? Хăçанччен вĕрес тет ĕнтĕ Иливан хăйĕн асамлă шăпăрне? Темле тăрăшсан та çĕнтерейместь вĕт, çĕнтерейместь вăл Ахтупая!

Иливан хăй пĕлекен нумай-нумай кĕвве каласа тухрĕ ĕнтĕ, тек унăн каламалли юрри те юлмарĕ тейĕн, анчах шăпăрçă çĕнĕрен çĕнĕ кĕвĕ тупать, пасăрхинчен те хитри, пасăрхинчен те янравли. Теплере пĕрре вара хăй такмакласа та илет:

– Шăпăрçăм-шăпăрăм,
Ман сассăма кам çĕклĕ?
Ман сассăма эс çĕкле,
Сан сассуна эп çĕклем.

Ахтупай та парăнмасть, кăшăлласа каснă сарă çўçне лăстăр! силлесе илет те:

Çакă ялти сар хĕре
Куçăм хывни сакăр çул,
Каять тесен чунăм çук,
Парса илме мулăм çук! –
тесе хурать.

Иливан тата çĕкленерех такмаклать:

Тевет, тевет теетĕр,
Тевет сире çакланмасть,
Сар хĕр, сар хĕр теетĕр,
Сар хĕр сире çакланмасть...

Унтан вĕсем шăпăр какăрне каллех çăвара хыпаççĕ, икĕ шăпăр, икĕ телейсĕр хĕр пек, чăрăна пĕлмесĕр макăраççĕ. Халĕ Иливан кĕввинче ирхине тин çеç вăрмана тухнă кĕтў ачин айванла савăнăçĕ çук ĕнтĕ, халĕ шăпăр такам пурнăçĕнчи телейсĕр кунсем çинчен, çын асапĕ, ăнăçсăр юратăвĕ çинчен хурлăхлăн каласа парать. Тен, ку çын çав çамрăк кĕтў ачиех пулĕ тет Ахтупай, анчах ку кĕтў ачин савăнмалли нимех те юлман иккен. Ун савнийĕ каççерен тек вăййа тухмасть, вăл ĕнтĕ темле пуян та чурăс çын арăмĕ пулса тăнă. Вăл кашни ир çўрекен уçланкă, ем-ешĕл курăкпа та сап-сарă чечекпе çиçсе тăнă уçланкă, йăлтах çаралса юлнă; таврара пĕтĕмпе кичемлĕх, тунсăх...

Шăпăр калакан майăн çапла шухăшласа тăракан Ахтупай юлташĕ çине пăхрĕ те шартах сикрĕ – Иливан сăмсинчен юн каять. Хăй çапла маттурланать-ха, урисемпе ташланă пек туса шăпăрне вĕрет. Акă ун шăпăрĕ аларан вĕçерĕнчĕ те çĕре çатлатса ўкрĕ, ун хыççăн, касса янă юман пек, Иливан хăй те урайне персе анчĕ.

– Çĕнтертĕн, джигит, якши! – кăшкăрса ячĕ Карамыш Ахтупай патне эрех йăтса пырса. Ахтупай куркана тытмарĕ, часрах юлташĕ патне ыткăнчĕ.

Тахăшĕ лаша кўлсе пачĕ, тахăшĕсем Иливана урапа çине çĕклесе хучĕç, таçтан Иливанăн çывăх тăванĕсем – Неспикепе Северпи килсе çитрĕç, Ахтупай, пукан çинче ухмаха тухнă çын пек лараканскер, ăна-кăна нимĕн те асăрхамарĕ. Вилнĕ çынна хунă лав хапхаран тухнă чухне çеç вăл тăна кĕнĕ пек пулса урапа çине тăчĕ. Пĕр ача ăна шăпăрне тыттарчĕ, тепри çăм шлепкине тăхăнтарчĕ.

Шăпăр какăрне чикме тăрсан Ахтупай аллине кĕсьене ячĕ те унтан вунă алтын укçа кăларчĕ. Ку мĕнле укçа пулма пултарнине ăнкарса илсе шăпăрçă ўсĕр çын пек тайкаланса пўрте кĕчĕ.

– Мейĕр ылтăнăра. Мана ун пек укçа кирлĕ мар, – терĕ те вăл ылтăнне урайне çĕклесе çапрĕ. Вара никам çине çавăрса пăхмасăр каялла тухрĕ.

# Хаваслă 2014 самант

## Космонавтсем

## Пуçватмăшсем

1



**Сылтăмалла:** 1. Ĕлĕкхи вырăссен юханшыв карапĕ. 2. Ял хуçалăх культури. 3. Кампучири хула. 4. Урапа-çуна пайĕ. 5. Апат-çимĕç. 6. Инçет Хĕвелтухăçĕнчи пулă. 7. Пахча-çимĕç.

***Хуравсене тĕрĕс тупсан, пĕрремĕш юпара космос карапĕн ячĕ, иккĕмĕшĕнче – тĕнчери пĕрремĕш космонавт летчик хушамачĕ вуланĕç.***

2



**Сылтăмалла:** 1. Пахчаçимĕç. 2. Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи çурутрав. 3. Пушка пайĕ. 4. Мари Элти Атăл çинчи пристань. 5. Юпана çирĕплетмелли хушма хатĕр.

***Пĕрремĕш юпара – СССРти космос карапĕ, иккĕмĕшĕнче – иккĕмĕш космонавт летчик.***

3



**Сылтăмалла:** 1. СССРта хатĕрленĕ хăй тĕллĕн вĕçсе хăпаракан, кайран анса ларакан космос карапĕ-самолет. 2. К. Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романри сăнар. 3. Тăван. 4. Тĕнчипе паллă океанограф, аквалан «авторĕ». 5. Пăлансене нартăна кӳлсен хăваламалли шăчă. 6. Итальянецсен композиторĕ В. Беллини кĕвĕленĕ опера. 7. Ю. Скворцов çырнă «Сăваплă вут» повеçĕнчи сăнар. 8. Вырăссен драматургĕ е чăваш ӳнерçи.

***Пĕрремĕш юпара – паллă космодром, иккĕмĕшĕнче – чăвашран тухнă виççĕмĕш космонавт летчик.***

4



**Сылтăмалла:** 1. Атăçăн, çăматăçăн ĕç хатĕрĕ. 2. С. Рахманинов опери. 3. Çăткăнлăх, туртăм, кăмăл, ĕмĕт. 4. АПШри штат. 5. Радио шутласа кăларнă Раççей ăсчахĕ. 6. Ç. Элкер калавĕ. 7. Тюлень тĕсĕ.

***Пĕрремĕш юпара – тӳпери хăйĕн янкăрлăхĕпе иккĕмĕш вырăнта тăракан çăлтăр, иккĕмĕш юпара – СССРти тăваттăмĕш космонавт летчик.***

## Икĕ сăмах урлă




***Пĕрер саспалли улăштарса, Сурăм шывĕ хĕрринчен Елчĕк районĕнчи Тăрăм ялне çитме, çыран хĕрринче хуранпа пулă яшки пĕçерме, хурăн тăррине курака хăваласа лартма пулать.***










**Пуçватмăшра пирĕн тăрăхра пурăнакан курак тата Америкăри чи пĕчĕк кайăк-колибри ячĕсем вырнаçнă та ĕнтĕ. Вĕсемпе усă курса клеткăсене ытти сăмахсене çырса тултарăр:**

Анапа–Венев–Бакал–Белок–Курак–Ларма–Норма–Погон–Ритон–Скотт–Талăк–Тирек

Адамар–Анорак–Асамат–Балкар–Егоров–Калуга–Канкан–Кварта–Маруся–Мценск–Натака–Нурлат–Папаха–Польша–Помост–Çураçу–Ушанар–Таната–Турист–Хурама

Аппарат–Балобан–Ганимед–Казаков–Каларăш–Кальмар–Каракас–Картина–Колибри–Кудаков–Лаванда–Лупашка–Неверов–Ордунар–Рамазан–Разетка–Скурпул–Тактика–Тунката–Урхамах.

*Юрий ФРОЛОВ* (Шупашкар) *хатĕрленĕ.*